24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
ФЕВРАЛЬ
27
ЭРНЕКУН
49 (6074) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Колхозла суту-илĕве организацилесе ертсе пымалла

Колхозла суту-илӳ çĕршывăн товар çаврăнăшĕнче ялан пысăк вырăн йышăнса пынă. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче колхозла суту-илӳ татах та пысăкрах вырăн йышăнса тăма тивĕçлĕ. Çакна ĕнтĕ суту-илӳ работникĕсем тата колхозсен руководителĕсем пĕтĕмĕшпех ăнланса илес пулать.

Колхозсем кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Пахча-çимĕçсем, уйрăмăнах çĕрулми тĕлĕшпе колхозсемпе колхозниксен кăçал суту-илӳ ĕçне сарса яма пысăк майсем пур. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç ӳссе пынă май, вĕсен продукципе суту-илӳ тăвас ĕçе те лайăх организацилеме условисем çителĕклĕ. Государство умĕнчи пур обязательствăсене те тултарнă хыççăн, колхоза кирлĕ пур фондсене те тунă хыççăн, колхозсемпе колхозниксен тырпул хăйсене пурăнмалăх та, базара илсе тухса сутмалăх та юлать. Фронта пулăшас тесе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен рабочисем валли тырпул, çĕрулми, аш-какай, пахча-çимĕçсем, сĕт-çу тата ытти продуктсене базара илсе тухса сутни халĕ çĕршыв пурнăçĕнче пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăмалла. Анчах та колхозла суту-илӳ ĕçĕ хăй тĕллĕнех пулса пыма пултараймасть. Ăна организацилес пулать: колхозсенче агитациллĕ ĕçе туса ирттермелле, продуктсене рынока илсе интерессине организацилемелле, базарсенче вырăнта тунă промтоварсемпе суту-илӳ тăвас ĕçе йĕркелесе ямалла. Ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шаннă çĕрте суту-илӳ питех те вăйсăрланать, базарсем вара спекулянтсен, усламçăсен ирттĕхмелли вырăнĕсем пулса тăраççĕ.

Çакна ăнланса илнĕ çĕрте колхозла суту-илӳ ĕçне организацилесе пыраççĕ. Калининский районри колхозсем çак ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Кушар Юнтапари Каганович ячĕпе тăракан колхоз Шупашкар хулинчи предприятисенче ĕçлекен рабочисене сутма ялхуçалăх продукчĕсем 4 лав тиесе килнĕ. Колхоз рабочисене 300 килограмм купăста, 600 килограмм сухан, 300 килограмм шăрçа сутнă. Çак районри Уйкас Юнтапари «Новая жизнь» колхоз та Шупашкар базарĕнче сутма виçĕ лавпа 300 килограмм купăста, 200 килограмм шăрçа, 200 килограмм сухан, 37 литр сĕт илсе килнĕ.

Кун пек тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать. Акă, сăмахран, Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ Юнга» колхоз председателĕ Салдакеев юлташ пирĕн хаçатра çапла çырчĕ:

«Пирĕн фабрикăсемпе заводсем фронт валли ĕçлеççĕ. Фронт ыйтнине пурнăçлас тесе, рабочисем кунĕн-çĕрĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Вĕсем валли апат-çимĕç продукчĕсем кирлĕ — колхозниксен тыслă ĕçĕ. Çакна шута илсе, колхоз ытлашши ялхуçалăх продукчĕсене хулари предприятисенчи рабочисене сутма шутлать. Çапла, çитес кунсенче колхоз хулана илсе тухса 2 сысна, 2 центнер çĕрулми, пĕр центнер сухан, 1000 литр сĕт сутма палăртрĕ».

Халăхи обстановкăна хаклама, ăнланма пĕлекен руководительсем çакăн пек тăваççĕ те ĕнтĕ. Ун пек ĕçлеме пирĕн пур колхозсен те условисем пур. Мĕншĕн-ха, сăмахран, Шупашкар çывăхĕнчи колхозсен çавăн пек тăвас мар? Шупашкарта базар пулнă кун, калăпăр, Ишлей районĕнчи вуншар колхозсем организованно тухса ялхуçалăх продукчĕсемпе суту-илӳ тума пултараççĕ-и? Пултараççĕ. Анчах çак ĕçе организацилекен, ертсе пыракан пулмалла. Районсенчи суту-илӳ отделĕсен, колхоз председателĕсен ĕнтĕ шăпах çавăн пек организаторсем пулса тăмалла.

Колхозла суту-илӳ начар пулса пынин тĕп сăлтавĕ çакăнта пулать: райисполкомсен, райторготделсен, кооперативсен хăшпĕр работникĕсем, ялсовечĕсемпе колхозсен председателĕсем рабочисемпе служащисене ялхуçалăх продукчĕсем çителĕклĕ парса тăрас ĕçе хакламан, колхозла суту-илĕве организацилемен. Çавна пула чылай продуктсене пысăк хакпа, спекулянтла майсемпе колхоз базарĕн тулашĕнче сутса пĕтернĕ.

Колхозла суту-илӳ ĕçĕ çине парти организацисен, советсен, пичетĕн тăтăшах çавăрăнса пăхмалла, вăл ĕçе ертсе пырассине пĕр минутăлăха та манмалла мар. Апла пулин те чылай райкомсем тата райисполкомсем çак питех те кирлĕ ĕçе час-часах манса хăвараççĕ. Пĕтĕм ĕçе колхоз рынокĕсен комитечĕсем çине шанса параççĕ. Паллах, рынoксен комитечĕсем çине пысăк ответлăх хунă, вĕсен колхозсемпе договорсем туса суту-илӳ ĕçне организацилемелле, колхозсемпе тачăрах çыхăнса тăмалла. Вĕсем халĕ çак ĕçе питех те çителĕксĕр туса пыраççĕха. Вĕсен ĕçне чылай лайăхлатмалла. Анчах вĕсем çине кăна шанса ларни йăнăш пулнă пулĕччĕ. Парти райкомĕсемпе райисполкомсен, пуçламĕш парторганизацисемпе ялсовечĕсен колхозла суту-илӳ ĕçĕпе куллен интересленмелле, ăна ертсе пыма пĕлмелле.

Колхозла суту-илӳ хулари ĕççыннисене продовольстви парса тăрас ĕçре паха мероприяти пулса тăрать. Колхоз правленийĕсемпе тата колхозниксемпе суту-илӳ çинчен никам та калаçман пирки, продуктсене рынока илсе çитересси организацилемен пирки тата вырăнта туса кăларакан промтоварсемпе суту-илӳ тăвассине организацилемен пирки çеç колхозла суту-илӳ вăйсăрланать пулсан, çакă вăл пысăк йăнăш пулса тăрать. Çав çитменлĕхсене май пур таран хăвăртрах пĕтерес пулать. Колхоз правленийĕсен вĕсене колхозла суту-илӳ çинчен такам аса илтерессе кĕтсе ларас пулмасть, хăйсен резервĕсене шута илсе, çав резервсене çийĕнчех ĕçе ярас пулать. Колхоз пуссисенче ытлашши çĕрулмине çĕртсе янисем те тепĕр чухне пулкалаççĕ. Анчах çав çĕрулмине çĕртеччен, ăна колхоз базарне илсе тухса сутас ĕçе колхоз председателĕ организацилеместь пулсан, çакă вара çĕршыв умĕнче пысăк преступлени туни пулать.

Калини хулара тата рабочисен поселокĕнче колхозла суту-илӳ татти-сыпписĕр пулса пымалла тăвас пулать,— çакăн пек пирĕн умра тăракан пысăк задачăсенчен пĕри.

ТАСС ОПРОВЕРЖЕНИЙĔ

Таçта, Бургаспа Стамбул хушшинче, Турцин 300 тонна водоизмещениллĕ «Чанхая» ятлă пароходне путарни çинчен Германири информаци бюровĕ пĕлтерӳ сарать. Çав пĕлтерӳре кăтартса панă тăрăх, пароходa путарнине официальнăй йĕркепе çирĕплетсе пани те, ăçта путарнине тĕплĕн кăтартса пани те çук иккен. Çапла пулин те, нимĕçсен çӳлте асăннă фашистла агентстви, гитлерла пропагандăн ялан-хи ирсĕр меслечĕсемпе усă курса, «Чанхая» парохода советăн подводнăй лодки атакăланă тата артиллерипе персе путарнă тесе çирĕплетсе калама хăяты.

Суя хыпарсене шухăшласа кăларнă чухне питех те васкавине пула çав хыпарăн авторĕсем хăйсен ирсĕр те шулерла меслечĕсене вĕçне çитиех тăрă пыв çине кăлараççĕ. Турци суднисене путарни çинчен вăл ĕлĕкрех сарнă, анчах та тахçанах тăрă шыв çине тухнă провокациллĕ элексем пекех, нимĕçсен фашистла пропагандин çак черетлĕ элекĕ те пурпĕрех путланса ларать. Çав провокациллĕ элексене сарнă чухне гитлеровецсем пĕр тĕллев тытаççĕ: нимĕçсен фашистла пиратĕсем Хура тинĕсре тунă преступленисене шăлса витсе лартасси тата нейтральнăй çĕршывсенчи общество шухăшне пăтраштарса яма хăтланса пăхасси.

Хĕрлĕ Çарăн сывлăш-çар вăйĕсен начальствующи тата рядовой составне орденсемпе тата медальсемпе наградăлани

Фашистла захватчиксене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çарăн сывлăш-çар вăйĕсен начальствующи тата рядовой составĕн группине наградăланă.

ЛЕНИН орденĕпе 38 çынна наградăланă, вăл шутран: старши лейтенанта **А. Х. Авдеева**, полковой комиссара **Н. П. Бабака**, старши лейтенанта **[illegible] А. Бондаренкона**, батальоннăй комиссара **С. Я. Бурдыгова**, старши лейтенанта **И. В. Васильева**, политрука **[illegible] С. Долерева**, лейтенанта **В. В. Здо[illegible]**, кĕçĕн лейтенанта **В. П. Зелен[illegible]**, старши лейтенанта **И. Г. Зуева**, лейтенанта **В. М. Кайнова** т. ыт. те.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе 259 çынна наградăланă, вăл шутран: старшинана **И. Р. Абрамчука**, лейтенанта **А. В. Аверина**, лейтенанта **А. И. Агеева**, иккĕмĕш рангри воентехника **В. И. Алексейцева**, лейтенанта **Н. М. Алышева**, капитана **Ю. А. Аникеева** т. ыт. те.

ХĔРЛĔ ÇĂЛТĂР орденĕпе 284 çынна наградăланă, вăл шутран: кĕçĕн сержанта **Я. И. Адаменкона**, капитана **А. Н. Адамова**, красноармееца **А. Г. Аксенова**, лейтенанта **Г. И. Акулина**, сержанта **Г. Ф. Алексеева**, старши сержанта **С. С. Аксютина** т. ыт. те.

«ЗА ОТВАГУ» медальпе 126 çынна наградăланă.

«ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» медальпе 117 çынна наградăланă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 25-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 25-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, тăшмана хирĕç çапăçса, малалла куçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсен фашистла войскисем техника енĕпе тата уйрăмăнах чĕрĕ вăй енĕпе пысăк çухатусем тӳсеççĕ.

Февралĕн 24-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 20 самолетне персе антарнă. Пирĕн 6 самолет пĕтнĕ.

* * *

Февралĕн 24-мĕшĕнче пирĕн авиацичасĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 90 лавне яхăн, 9 орудине, зенитнăй пулеметсен 39 точкине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, чугунçул çинчи 6 вагона, 2 бронеплощадкăна тата пĕр паровоза çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине виçĕ батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 13 пункта ирĕке кăларнă тата нимĕçсен пехотин полкне, саперсен батальонне, противотанковăй оборонăн дивизионне çапса аркатнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем халăх пурăнакан 4 пункта ирĕке кăларнă тата нимĕçсенне виçĕ йывăр танк, 9 орудие, 31 пулемет, 5 миномет, 318 винтовка, куçса çӳрекен икĕ мастерской, 3 радиостанци тата тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 500 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Юрченко юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри танкистсем (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ), халăх пурăнакан И. пунктшăн çапăçса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 220 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 6 орудие, 4 станковăй пулемет тата 8 миномет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн танкистсем тытса илнĕ трофейăсем хушшинче—танксене хирĕç пемелли 7 орудие, 5 станковăй пулемет, 4 миномет, 600 снаряд, 460 мина, 10.000 винтовка патронĕ, 30 автомашина тата урана тăхăнмалли япаласен склачĕ.

* * *

Кузнецов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн саперсем халăх пурăнакан Б. пунктăн районĕнче нимĕçсен аэродромĕ çине пырса кĕнĕ те 110 тонна авиабомба, 103.000 снаряд сирпĕнтерсе янă тата пирĕн чаçсем вырнаçнă çĕре 60 пичке горючи, 1500 снаряд илсе тавăрăннă.

* * *

Цыс юлташ командир пулса ертсе пыракан икĕ танкăн экипажĕсем Л. ялĕнче противника икĕ хутчен атакăланă. Орудисенчен персе тата гусеницăсемпе таптаса, пирĕн танкистсем тăшманăнне танксене хирĕç пемелли 7 орудие, 19 пулемет пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен икĕ танкне персе çĕмĕрнĕ, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене темиçе вуншар çынна стройран кăларнă.

* * *

Калинин облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен А. юлташăн партизанла отрячĕ нимĕçсен çар снаряженийĕ турттарса пыракан автоколонни çине пырса тапăннă. Отрядри боецсем гранатăсемпе çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем пăрахса нимĕçсен 60 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 605-мĕш маршевăй батальонĕнчи 6-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ санитар-ефрейтор Карл Братцель çапла каласа панă: «Иртнĕ çулти октябрь уйăхĕнче мана çара илчĕç. Декабрĕн 12-мĕшĕнче мана маршевăй батальонпа пĕрле Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне ячĕç. Пирĕн ротăри салтаксем чылайĕшĕсем 35—42 çулта. Январь уйăхĕн пуçламăшĕнче ура-алсене татса пăрахмаллах тăм илтернисем 70 çынна яхăн пулнă. Пирĕн ротăри 3 салтак Виндинг, Грейнер тата Штрассер каçхине разведкăна кайрĕç те ирхине урисене тăм илтерсе таврăнчĕç. Вĕсене лазарета ăсатрĕç. Вĕсем çакăншăн нимĕн те хуйхăрмарĕç. Пачах урăхла, вĕсем питĕ савăннă та çапла калаççĕ: Пирĕншĕн ĕнтĕ вăрçă пĕтрĕ, теççĕ».

* * *

Нимĕçсен салтакĕ Курт Линдеманн çумĕнче вăл хăйĕн çемьи патне Берлина ярса ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Линдеманн çапла çырнă: «Вырăссем пире пĕр минутăлăх та канăç памаççĕ. Пирĕншĕн кунта,—кăмăллатпăр-и çакна эпир е кăмăлламастпăр,—питĕ начар. Вăрçас шухăш пĕтĕмпех пĕтрĕ. Пире кунта пурте йăлăхтарса çитерчĕ».

* * *

Норвеги патриочĕсем Тронхейм çывăхĕнче нимĕçсем çĕнĕрен тунă икĕ çар складне пĕтерсе тăкнă. Пушар вăхăтĕнче боеприпассемпе бензинăн пысăк запасĕсем пĕтнĕ. Намсус хулинче нимĕçсен продовольстви складне çунтарса янă. Норвегире нимĕçсен складĕсенче пушарсем пулассипе сарăлсах пырать. Çавна май Гитлерăн «Дейче Цейтунгин Норвеген» хаçачĕ пушарсем Германие нумай миллионлă тăкаксем кӳреççĕ тесе шикленсе çырать.

* * *

Калинин облаçĕнчи Кировски районри Большие Клочки ялĕнчен тухса кайнă чухне гитлер бандичĕсем аманнă 27 красноармееца персе вĕлернĕ.

* * *

Омск облаçĕнчи ĕççыннисем, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун тĕлне икĕ поезд-мунча тата икĕ бронепоезд туса, 24 вагонран тăракан эшелонпа пĕрле фронтри боецсемпе командирсем тата политработниксем валли 18.630 посылка янă. Посылкăсем ăшĕнче—пыл, пĕçернĕ кайăк-кĕшĕк, польменсем, сыр, печени, пируссем, алла çыхмалли сехетсем, туалет япалисем пур. Омск облаçĕнчи ĕççыннисем, унсăр пуçне, госпитальре выртакан аманнă боецсемпе командирсем валли нумай парнесем панă.

Февралĕн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн боецсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенне 3 танк, 6 орудие, 19 миномет, 17 пулемет, 234 винтовка, 1.250 снаряд, 136.000 винтовка патронĕ, 2.500 граната, 5 радиостанци, походнăй кухня тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Гордов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) 10 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 10 танкне, тĕрлĕ калибрлă 79 орудине, 70 минометне, 59 пулеметне, танксене хирĕç пемелли 5 пăшалне, çар грузĕсем тиенĕ 107 автомашинине тата 92 лавне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 3.000 çынна яхăн вилсе пĕтнĕ.

* * *

Старши лейтенант А. Г. Кухтин командир пулса ертсе пыракан пысăк калибрлă пулеметсен взводĕнчи боецсем (Хĕвеланăç фрончĕ) пĕр çапăçура нимĕçсен 6 танкне стройран кăларнă тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Красноармеец Черный юлташ огневой позицие хăçатсемпе çырусем илсе кайнă чух К. ялĕн хĕрринче нимĕç салтакĕсен ушкăнне асăрханă. Хăюллă боец пĕр сурттăн маччи çине хăпарса ларнă та винтовкăран персе 12 гитлеровецa пĕтерсе тăкнă.

* * *

Курск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен Н. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ засада тунă та нимĕçсен отрячĕ çине персе тăшманăн 18 салтакне вĕлернĕ. Тепĕр темиçе кунтан партизансем нимĕçсем çĕр каçма вырнаçнă ял çине пырса тапăннă. Советăн мухтавлă патриочĕсем 29 гитлеровецa вĕлернĕ тата 4 автомат, миномет, 2 пулемет, боеприпассем тата паха вăрттăн документсене тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен салтакĕ Диттке çумĕнче вăл Киль хулинче Фридрих Диттке патне çырнă çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Пирĕн паян апат-çимĕç илмеллеччĕ, анчах та ăна илсе килмерĕç. Пирĕн пурнăç кунта халĕ питĕ начар. Лайăххине кĕтмелли çук пулĕ ĕнтĕ, пурнăç татах та япăхасса кĕтмелле... Пуç ыратни пурне те тарăхтарса çитерчĕ. Пытăсенчен нисăта та тасалма çук. Пирĕн каллех тата темиçе юлташа леш тĕнчене ăсатмалла пулчĕ. Вĕсене партизансем вĕлернĕ».

* * *

Нимĕçсен салтакĕ Альфред Дамм тăван çĕршывне яма ĕлкĕреймен çырăвĕнче çапла çырнă: «Пирĕн кунта питĕ йывăр çапăçусем пыраççĕ. Сĕм тĕттĕм пуличченех тупăсем пеме чарăнмаççĕ. Нимĕç салтакĕсен юнĕ мĕн чухлĕ юхнине кам хисеплесе кăларĕ-ши. Эпир малти лининчен 8 километрта тăратпăр, анчах та çакă пире çухатусем тӳсесрен çăлмасть. Тăтăшах вырăссен бомбардировщикĕсем килсе тапăнаççĕ. Аманнисене Германие ăсатнă, вĕсем телейлĕ ĕнтĕ».

* * *

Смоленск облаçĕнчи Пекарево ялĕнчен тухса кайнă чух Гитлер бандичĕсем мирлĕ халăха çаратса пĕтернĕ. Унтан вĕсене сарайне хăваласа хупнă та вут тивертсе янă. Вутра пĕтĕм ял пĕтнĕ. Сарайсенчен пĕринче пирĕн боецсем çунса кайнă 18 колхозникăн виллине тупнă. Вĕсенчен çаксене палласа илме май килнĕ: Исаев Иван—39 çулта, унăн арăмĕ—35 çулта, Исаева—11 çулта, Прохнова Александра—25 çулта. Урамра студент пулнă 18 çулти Сергей Смирновăн тата Вязьмăра магазинсенчен пĕринче продавщица пулнă З. Ковалевăн виллисене тупнă.

* * *

Германири Варель хулинче пурăнакан халăх февраль уйăхĕнчи 20 кун хушшинче 650-шар грамм кукуруза çăкăрĕ тата 750-шар грамм çĕрулми анчах илнĕ. Çав вăхăтра Варель хулинче выçăпа 179 çын вилнĕ. 7 çын хăйсене хăйсемех вĕлернĕ.

* * *

Орджоникидзе крайĕнчи ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле фронтри боецсемпе командирсем тата политработниксем валли 112 вагон посылкăсем янă. Тăрăшса хатĕрленĕ посылкăсем ăшне çу, ăшаланă какай, коньяк, фруктсем, варени, табак, ăшă чăлхасем тата ытти парнесем те хунă.

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа панă приказ пирки Англи хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, февралĕн 24-мĕш. (ТАСС). Англи хаçачĕсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарни çинчен тата Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ панă приказ çинчен нумай çыраççĕ. Çак приказа хаçатсем хăйсен малтанхи страницисенче чи курăнмалли вырăнсене тата пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăларнă. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарни çинчен умстатьясем тата очерксем пичетленĕ.

«Таймс» хаçат хăйĕн «Сталин чĕнĕвĕ» ятлă статьинче çапла çырать: халĕ ĕнтĕ вăрçă ĕçĕсене, Сталин каланă пек, вăхăтлăха пулса иртекен, сĕçсăр[illegible] килекен явленисем мар, пĕрех май таракан факторсем: тыл çирĕплĕхĕ тата çарăн шухăш-кăмăлĕсем татса памалла. Халь тӳссе ирттерекен тапхăртан Совет Союзĕ çĕнтерӳллĕн тухĕ. Вăрçа хутшăннă çĕршывсенчен нихăшĕ те вăрçă йывăрлăхне Совет Союзĕ пек тӳсĕмлĕн чăтса ирттермен. «Çар ĕçне пурте вĕренмелле» текен сăмаха вырăс халăхĕ, нумайĕшĕ малтанхи вăхăтра ăнланнă пек мар, лайăхрах ăнланать». «Вырăссен çĕнтерĕвĕ вăл — вырăс çарĕпе вырăс халăхĕн тимлĕхĕ çинче тата вĕсен дисциплини çинче çитĕнсе пырать», — тесе çырать хаçат. Ютçĕршыв хаçачĕсем Хĕрлĕ Çар нимĕç халăхне пĕтерсе тăкас тата Германи государствине тĕп тăвас тĕллеве тытса çапăçать тесе çырни çинчен Сталин — ку ухмахла сӳпĕлтетни пулать тенине илсе, «Таймс» хаçат çапла çырать: Совет Союзĕ çĕнтерӳ тунă хыççăн Европăна реконструкцилес задачăсемпе интересленет, ку задачăсем çине вăл творчествăллă пăхать.

СССР хăй Атлантика хартийĕн тĕп шухăшĕсемпе килĕшни çинчен пĕлтернине астутарса, «Таймс» хаçат Сталин приказĕнчи: «ССР Союзĕнчи расăсен пĕртанлăхĕн теорийĕ тата ытти халăхсен прависене хисепленин практики ирĕклĕхе юратакан пур халăхсем те совет халăхĕн тусĕсем пулса тăрасси патне илсе çитерчĕ» тенĕ сăмах Атлантика хартийĕн шухăшĕпе килĕшнине кăтартса парать.

Малалла хаçат çапла çырать: «Юлашки ултă уйăх хушшинче событисем хăвăрт тата хăрушла ӳссе пычĕç. Çавăнпа та, тен, çĕнĕ декларации йышăнмалли вăхăт та часах çитсе тăрĕ. Çав декларацие йышăннă çĕрте Россия хăй те пулĕ, унта вăл хăйшĕн малашне хăрушлăхсăр пурнăç йĕрки тума ыйтнине пурте йышăнĕç. Хĕрлĕ Çар тунă çитĕнӳсем государствăсен союзĕнче Россия çине кĕçĕн юлташ çине пăхнă пек çеç пăхма шутлакан тĕрлĕрен айванла шухăшсене йăлтах сирсе ячĕç, малашне пĕтĕм итогсене шутланă чух вăл ертсе пырас ĕçре пулмалла. Хĕрлĕ Çар уявĕ ячĕпе юлашки икĕ кун хушшинче Мускавра тĕрлĕ çĕршывсенчен вĕçĕмсĕр саламсем илчĕç. Çак саламсем хушшинче Америкăн çар министрĕ Стимсон янă çыру паллă вырăн йышăнса тăрать. Хальхи вăхăтра Пĕрлешӳллĕ Штатсенче те, Англири пекех, вăрçăра çĕнтерӳ тума, çавăн пекех тата мир тума та Советлă Российăпа союзлă пулни пысăк вырăн йышăнса тăнине пĕтĕмĕшпех тата чĕререн ăнланаççĕ».

«Таймс» хаçат тата Хĕрлĕ Çар çинчен очерк пичетлесе кăларнă. Çав очеркра çар комиссарĕсем çинчен те каланă. Çар комиссарĕсем боецсене паттăр кăмăллăх тата нациллĕ пĕрлĕхтытма воспитани парас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăннине кăтартнă. «Çак паттăрла шухăшпа вăйлă техникăпа пĕтĕçтерни Хĕрлĕ Çара вăрçăн йывăр ларутăрăвĕсенчен тухма май пачĕ» — тесе çырать «Таймс» хаçат.

«Обсервер» хаçат Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем çинчен çырнă статьинче — Хĕрлĕ Çар вăл «питех те пысăк çар вăйĕ, ăна пĕтĕм ирĕклĕ тĕнче саламлать», тесе çырать.

«Рейнольдс ньюс» хаçат Хĕрлĕ Çар çинчен Макс Вернер çырнă пысăк статьяна пичетлесе кăларнă. Вăл статьяра Вернер çапла çырать: «Хĕрлĕ Çар пĕтĕм демократиллĕ государствăсен коалицинчи чи хăватлă вăй пулса тăнă пирки халĕ ĕнтĕ нимĕн те иккĕленмелле мар. Хĕрлĕ Çар вăл — халăх çарĕ. Хĕçпăшалĕ тĕлĕшпе те, политикăллă пĕлӳлĕхĕ енĕпе те вăл хальхи вăхăтри çар пулса тăрать. — Вăл демократиллĕ тата революциллĕ традицисене тытса пынипе уйрăмах палăрса тăрать. Вăрçă ĕçĕсенче вăл хăйĕн чăтăмлăхĕпе, чаплă ĕçĕсемпе, тактика искусствин тата хальхи вăрçă наукин мелĕсемпе усă курма пĕлнипе паллă пулса тăрать».

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çапла çырать: Сталин хальхи вăхăтра вăрçă ĕçĕсен пуçарулăхĕ вырăссен аллинче тесе тĕрĕс калать. Нимĕçсем вырăс халăхĕн никам çĕнтереймен вăй-хăват пуррине тата ку вăй-хăват Гитлера çĕнтерессине патне илсе çитернине туйса илчĕç. Ун пек çĕнтерекен вăй мĕне пĕлтернине Германия пĕрре тӳссе курнă та ĕнтĕ. Ку вăя вăл татах тепĕр хут тӳсĕ».

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕш. (ТАСС). Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин панă приказ пирки Англи хаçачĕсем нумай çыраççĕ, ун çинчен çырнисене курăнмалла вырăнсенче пичетлесе кăлараççĕ.

«Манчестер гардиан» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Сталин хăйĕн халăхне вăрçăн малалли ĕçĕсем çине ăслăн пăхса асăрхаттарать: малалла вăйлă çапăçусем тăраççĕ, çавăнпа та çĕнĕрен танксем, самолетсем, орудисем туса кăларас ыйту кăшт та пĕчĕклен-мест, тет вăл. Унăн приказĕн чи интереслентерекен пайĕ вăл — Гитлер шайкипе Германи государстви хушшинчи тата халăх хушшинчи уйрăмлăха уççăн палăртса пани пулать. Хĕрлĕ Çар нимĕç халăхне е нимĕçсен государствине пĕтерме шутламасть. Унăн задачи — захватчиксене хăйĕн çĕршывĕнчен хăваласа кăларасси пулать. Вăл противника пăрăнмасан çеç вĕлерет. Унăн нимĕç халăхне раса тĕлĕшпе курайманлăх çук. Пĕтĕм вăрçă тăршшĕпех Россия çакăн пек позици тытса пырать».

«Дейли геральд» хаçат хăйĕн умстатьинче Сталин нимĕç халăхĕ çинчен каласа пани вырăс халăхĕ ку тĕлĕшпе мĕн шутлани çумне çĕнĕрен нимĕн те хушманнине кăтартса парать. «Совет Союзĕ тата совет пропаганди мĕн вăрçă пуçланнăранпах Германипе гитлерла Германи хушшинче уйрăмлăх пуррине тĕплĕн кăтартса пычĕ. Сталин противника пĕтĕмпех тата тĕппипех çапса çĕмĕрнинчен пуçне урăх нимĕн те тума шутламасть. Англири пур ответлă çынсен шухăшĕсем те çакăн пекех, тет «Дейли геральд» хаçат.

«Ивнинг стандарт» хаçат хăйĕн умстатьинче Сталин юлташ приказĕ пирки çырать. «Сталин приказĕ вăл государство ĕçĕсене туса пыракан сăмахĕ,—тесе çырать çав хаçат.—Ку приказа мĕнпур çĕршывсенче, çавăн пекех Германире те илтеççĕ. Вăл тĕнчери ирĕклĕ халăхсене пурне те кăмăла кайĕ тата шанчăк парĕ».

Хаçат Сталин юлташ—Хĕрлĕ Çарăн хăватне ют çĕрсене юрататакансенчен хăшпĕрисем хăйсен суйăмĕ çинче тӳссе курчĕç, ăна халĕ мухтанчăк нимĕç çарĕ тӳссе курать, тенине уйрăмăн палăртса парать. «Пĕтĕм ирĕклĕ тĕнче,— тет «Ивнинг стандарт» хăйĕн умстатьинче,—паян Хĕрлĕ Çара тивĕçлипе хисеплет, пĕтĕм тĕнче çак çарăн вăрçă ĕçĕсене ертсе пыракана, захватчиксене хирĕç тăмашкăн мĕнпур халăха çĕклентернĕ государственнăй деятеле тивĕçлипе тав тăвать.

Союзниксен тĕп тĕллевĕ вăл— фашистла Германин çарне çак çулта çĕмĕрсе тăкасси пулмалла. Ку тĕлĕшпе пирĕн хамăрăн икĕ çĕршыв халăхĕсем хушшинчи союзлă обязательствăсене çирĕплетмелле тата хамăр мĕн тума шутланине сăмахпа та, ĕçпе те кăтартса памалла. Çаксене тума вăхăт çитрĕ».

«Йоркшир пост» хаçат, Сталин приказĕ çинчен ăнлантарса парса, çапла калать: «Хĕрлĕ Çар пуçланнине уявланă кун—эпир вырăс халăхне пĕтĕм вăйсемпе пулăшу пама хатĕррине тата ку ĕçе татса пама пултаракан пысăк пурлăх хума пултарнине çирĕплетсе паракан кун тумалла. Гитлерла Германие аркатса тăкас ĕçе татса паракан мула хывма эпир пултаратпăр».

Лондонра тухса тăракан чехсен журналĕ «Млад чешски словенск» çапла çырать: «Европăри пусмăрта пурăнакан халăхсем, уйрăмăн илсен—Чехословаки халăхĕ те, Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем вĕсем хамăр çĕнтерессе пĕлтерекен шанчăк пулса тăрать тесе шутлаççĕ».

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂН ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Старая Русса районĕнчи çапăçусен малтанхи тапхăрĕ

Нимĕçсен позицийĕсем тĕлĕнче ытлашши çӳлтех те мар пирĕн самолетсен звени вĕçсе çӳренĕ. Зениткăсем кĕрленĕ, пулеметсем шатăртатнă, анчах та пирĕн самолетсем тăшман вырнаçнă тĕлте çаплах çаврăннă, вĕсем хăйсен задачисене пурнăçа кĕртнĕ. Самолетсем çинчен аялалла листовкăсем пăрахнă.

«30-мĕшпе 290-мĕш дивизисенчи тата «СС» дивизийĕнчи салтаксемпе офицерсем! — тенĕ çав листовкăсенче.—Сирĕн положени начах та шанчăксăр. Сире çавăрса илнĕ. Хирĕç тăнипе хăвăра кăна пĕтеретĕр. Хĕрлĕ Çарăн Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи командованийĕ сирĕн халăх хĕçпăшалĕсене пăрахса тыткăна парăнма сĕнет. Тыткăна парăннă мĕн пур нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пурнăç пама пулатпăр, лайăх пăхма тата вăрçă пĕтсессĕн хăвăрăн тăван çĕршывăра таврăнмашкăн май пама сăмах паратпăр. Кам та кам çак сĕнĕве йышăнмасть, вĕсене пурне те пĕр çын юлмиччен вĕлерсе пĕтерессĕ».

Çакăн пек листовкăсене февралĕн иккĕмĕш вунăкунлăхĕ вĕçĕнче пăрахнă; тепĕр 5—7 кун иртсен, пирĕн совет войскисем хăйсен сăмахĕсене çил çине пăрахманнине танатана лекнĕ нимĕçсем хăйсен çурăмĕсем çинче тӳссе иртересе, татах та тепĕр хут ăнланса илме пултарчĕç. 12.000 яхăн виле, темиçе çĕршер çын тыткăна лекнисем тата çапса çĕмĕрнĕ подразделенисен вăрман тăрăх сапаланса кайнă юлашкийĕсем — акă мĕн тăрса юлнă фашистла войскăсен виçĕ соединенийĕнчен. Анчах мĕн тери шанчăк хывнă пулнă вĕсем çине Гитлер!

290-мĕш дивизи совет çĕршывĕн чикки урлă июнĕн 22-мĕшĕнче каçнă, унăн составĕнче 3 пехотнăй полк, артиллери полкĕ, саперсен батальонĕ тата танксене хирĕç пемелли орудисен дивизионĕ пулнă. Çавăн пек йышах пулнă 30-мĕш дивизире те. Вăл хăй вăхăтĕнче Польшăн, Бельгин, Францин уйхирĕсене таптанă. Париж çине тапăнса пынă. Пирĕн территори çине çав дивизи пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанне çитичченех хĕçпăшалланса килсе кĕнĕ. Виçĕ пехотнăй полксăр пуçне, дивизи составĕнче — артиллери полкĕ, саперсен батальонĕ, велоэскадрон, зенитнăй артиллери дивизионĕ тата кавалери полкĕ пулнă.

«СС» дивизине пуринчен ытларах ситтлерла çамрăксенчен, штурмовой тата охраннăй отрядсенчен пухса йĕркеленĕ пулнă.

Нимĕçсем хăйсен Старая Русса районĕнче танатана лекнĕ войскисене чылай вăйсем парса тăнă, анчах та çав вăйсем те нимĕçсен 16-мĕш армине çăлма пултарайман. Нимĕçсен 5-мĕш пехотнăй дивизийĕ пирĕн войскăсен уххине, нимĕçсен 290-мĕш дивизине çавăрса илнĕскерне, тултан татса кĕме хăтланнă, анчах Осипов подполковникăн чаçĕпе тĕлпулса, нимĕçсем малтанхи çапăçурах пысăк çухатусем тӳснĕ.

Танатана лекнĕ нимĕçсен гарнизонĕсене транспорт самолечĕсемпе усă курса пулăшу парса тăрассине пирĕн авиацине зенитнăй установкăсем [illegible] аркатса тăкнă. Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем каласа панă тăрăх, салтаксен апат те [illegible] çăмăр паккĕ кунран кун чакса пынă. Чаçсенче вылăх апачĕ пулман пирки çĕршер лашасем вилнĕ. Пирĕн чаçсем халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ хыççăн фашистсенчен нумайăшĕсем тыткăна парăнма пуçланă. Çапла кута нимĕçсен 290-мĕш дивизийĕн 290-мĕш артиллери полкĕнчи 10-мĕш батарейăри салтаксем батарея командирĕпе Гергард Федерпа пĕрле, 30-мĕш пехотнăй дивизин разведка тăвакан дивизионĕн иккĕмĕш взвочĕ Гейнц Губер оберефрейторпа пĕрле, 254-мĕш строительнăй батальонăн 3-мĕш роти Отто Фосс унтерофицерпа пĕрле, «СС» дивизийĕн 1-мĕш полкĕнчи 1-мĕш ротăри салтаксен ушкăнĕ тата ыттисем те тыткăна парăннă. Çав çынсем хăйсен пурнăçĕсене сыхласа хăварнă. Пирĕн боецсене хирĕç тăракан нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем пирки вара калаçу кĕске пулнă: вĕсене пĕтерсе тăкнă.

Старая Русса районĕнчи юн тăканакан хаяр çапăçура Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн боецĕсемпе командирĕсем çавтери пысăк хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Паттăрсен малти речĕсенче, яланхи пекех, коммунистсемпе комсомолецсем пынă. Контратака тăвакан противника хирĕç Руденко капитан пĕр ротăпа пĕрле батарея командирĕ хăвăрттăн çапăçăва тухма задани илнĕ пулнă. Руденко юлташ тăшман группировкин тылне кĕтмен çĕртен пырса кĕнĕ те тăшмана флангран тата тылран çиçĕм пек хăвăртлăхпа пырса çапнă. Боецсем противникăн пехотине танксенчен татса уйăрнă, тăшманăн салтакĕсене паникăна ӳкернĕ, тӳррĕн тĕллесе пере-пере вĕлернĕ, штыксемпе чике-чике пăрахнă. Çапăçу хирĕнче противникăн 260 вилли выртса юлнă. Çав çапăçура комсомолец-красноармеец Черкасов юлташ хăйне уйрăмăнах палăртнă. Вăл фашистсен танкĕ патне шăвăнса пынă та нимĕçсен танк хыççăн пыракан 9 салтакне гранатăпа пĕтерсе тăкнă. Старшин сержант Бакалейникова çапăçусенчен пĕринче нимĕç салтакĕсен ушкăнĕ çавăрса илнĕ пулнă. Герой çухалса кайман, тăшмансене хирĕç хăюллăн çапăçма тытăнса, вăл 7 салтакпа пĕр офицера пĕтерсе тăкнă. Унтан вăл çапăçу хирĕнчен аманнă капитана Сергеев юлташа çĕклесе тухнă.

Оруди командирĕ комсомолец Гласенко хăйĕн орудине усă позицие илсе тухнă та, нимĕçсен пулемечĕсем вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, тӳррĕн тĕллесе персе 15 фашиста тата тăшманăн виçĕ огневой точкине пĕтерсе тăкнă.

Гущино ялĕпĕн пынă çапăçура пирĕн дивизисенчен пĕринчи автоматчиксен ротин политрукĕ Тюрников хăйне паттăррăн тытнă. Вăл хăйĕн ротине çапăçăва хăюллăн ертсе кайнă, яла пуринчен малтан çĕмĕрсе кĕнĕ. Унта вăл аманнă, анчах та ытти аманнă боецсене çапăçуран çĕклесе тухассине организацилемесĕр каялла тухман. Полкри медпунктра кайнă чухне вăл нимĕçсем контратака тума тытăннине çинчен пĕлнĕ. Суранĕсем питĕ ыратнине пăхмасăрах Тюрников çийĕнчех строя таврăннă та ротăна ертсе пырас ĕçе татах хăй çине илнĕ.

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем нимĕçсен войскисене малалла аркатса пыраççĕ.

И. ПАВЛОВСКИЙ.
(«Правда», февралĕн 26-мĕш).

Ивановăри рабочисен 1-мĕш добровольчески полкĕн утлă разведка подразделенийĕсенчен пĕрне добровольцсем пулса — граждан вăрçи участникĕ М. И. Ракитин тата унăн ывăлĕ Дмитрий кайнă. Ӳкерчĕкре: ополченецсем-разведчиксем М. И. Ракитин тата унăн ывăлĕ Дмитрий.

Ф. КАРЫШЕВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Малашне те паттăррăн кĕрешсе пырăпăр

Кирюхин юлташăн чаçĕ отечественнăй вăрçă фронтĕнче [illegible] çапăçса [illegible]. Совет информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, [illegible] 2.500 çын пĕтнĕ. Пирĕн паттăр боецсем [illegible] нумай трофейсем илнĕ.

Çав чаплă çĕнтерӳ ячĕпе Кирюхин юлташ [illegible] республикăри [illegible] телеграмма янăччĕ:

«Орденлă Чăваш республикинчи ĕçсынисен ячĕпе, Сире тата Сирĕн чаçри мухтавлă боецсемпе командирсене, политработниксене, Сухиничи хулине йышăнса илнĕскерсене, хĕруллĕн саламлаççĕ. Сирĕн часть нимĕç захватчикĕсене малашне те çĕнтерӳллĕн аркатса пырассине эпир шанатпăр.

Малалла—Хĕвеланăçнелле!

Сывă пултăр аслă Сталин!»

Çак салама чаçри «За родину» ятлă хаçатра пичетлесе кăларнă.

Çак кунсенче часть командирĕпе военкомĕ [illegible] ответлă çыру килсе çитрĕ.

«Çапăçăва кĕнĕренпе,—тесе çыраççĕ вĕсем,—пирĕн мухтавлă боецсемпе командирсем тата политработниксем çĕршер километр малалла кайрĕç, хăйсен çулĕ çинче халăх пурăнакан пĕр пункт хыççăн тепĕр пункта нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларчĕç.

Тăшмана хирĕç хаярррăн çапăçса, чаçăн пĕтĕм личнăй составĕ, Ленин—Сталин партийĕн ĕçне тата социализмлă тăван çĕршыва чĕререн парăннăскер, гитлерла бандăсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтере-пĕтере тăкать, совет ялĕсемпе хулисенчи халăхсене фашистла пусмăртан ирĕке кăларать. Фашистсем хăйсем вăхăтлăха тытса илнĕ районсене ямçăклăха [illegible] тата Т [illegible] пирĕн боецсем çав районсене ирĕке кăларнă.

Совет информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Кирюхин юлташăн чаçĕ [illegible] трофейсем илнĕ: [illegible]—300, ручной тата станоковăй пулеметсем—30 тата 108 грузовой, 34 çăмăл автомашина, мотоциклсем, 24 оруди, 2 танк, 6 тягач, чугунçул çинчи 499 вагон, 20 паровоз, 2 локомобиль, 2 самолет, 4 планер, боеприпассем тиенĕ 10 вагон тата ыттисем те.

Партипе правительство чаçăн ĕçне питех те пысăк хака хурса палăртрĕç, боецсемпе командирсенчен тата политработниксенчен 50 çынна ытла орденсемпе медальсем парса наградăланă. Вĕсем хушшинче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн лекторĕ пулнă В. О. Осипов юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

«Сире эпир çапла шантарса калатпăр,—тесе çыраççĕ юлашкинчен вĕсем,—эпир малашне те паттăррăн кĕрешсе пырăпăр. Чаçри боецсемпе командирсем тата политработниксем нимĕç оккупанчĕсене сахал мар аркатса пычĕç, малашне те ирсĕр оккупантсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкиччченех аркатса пырĕç...»

Çавăн пекех, Кирюхин юлташăн чаçĕнчи пĕр подразделенири боецсенчен те çыру килнĕ. Çав çырура Хĕрлĕ Çар ретне пирĕн республикăран кайнă боецсем—З. А. Алазов, В. А. Хохлов, М. А. Ананьев, И. И. Горшков, М. А. Аксенов тата ытти нумай юлташсен паттăр ĕçĕсене палăртнă.

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ панă приказ çине Хĕрлĕ Çар чаçĕсем пысăк çĕнтерӳсемпе ответлеççĕ

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи пĕр чаçĕсене те Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар XXIV çул тултарнă ятпа панă приказа вуларĕç. [illegible] орденоносец Стружкин юлташ тухса сăмах каларĕ.

— Эпир хамăр çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн тата унăн никама пăхăнманлăхĕшĕн, тĕрĕслĕхшĕн вăрçатпăр. Çак тĕрĕслĕхшĕн вăрçни пире капиталистех çĕнĕрен чаплă ĕçсем тума хавхалантарать, пирĕн хушăран геройсем кăларать. Юратнă Наркома приказĕ çине ответлесе эпир тăшмана татах та вăйлăрах çапăпăр. Эпир хамăр умри боевой задачăсене — кашни бомбăна тĕл лектернине, кашни пульăпа, кашни снарядпа нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕл тивертнине пурнăçласа пырăпăр. Тăшман парăнмасть пулсан, эпир, Хĕрлĕ Çар воинĕсем, ăна пĕтерĕпĕр, — терĕ вăл хăй сăмахĕнче.

Мирсанов юлташ командир пулса ертсе пыракан часть Хĕрлĕ Çар XXIV çул тултариччен малтанхи кунне тăшмана 5 ял туртса илнĕ. [illegible] 17 оруди, 14 пулемет, 75 мина тата ытти трофейсем илнĕ. Çак çарçи боецсем Оборона Халăх Комиссарĕн приказне вуланă хыççăн çапла каласа панă: «Сталин юлташ çак приказра пире Хĕрлĕ Çар вăйĕ мĕнре пулнине [illegible] фронтра усăн куратпăр: пирĕн çар вăрçă малалла пынă май çĕнĕрен çĕнĕ чĕрĕ вăйпа ӳссе пычĕ, вăл çын йышĕпе те, техникăпа та тулса пычĕ. Темиçе уйăх каярах чарса лартнă тăшмана эпир çине-çинех вирлĕн çапса амантрăмăр, кун пек аманнинчен халĕ вăл тек тӳрленеймĕ. Нимĕçсене çакăн пек хытă çапса амантас ĕçе пирĕн войскăсем хамăрăн аслă çулпуç тата полководец Сталин юлташ ертсе пынипе турĕç».

«Сталин юлташ паянхи приказра, — терĕç Мирсанов командирăн чаçĕнчи боецсем, — çĕнтерӳ пуласлăхне тата совет çĕрĕ нимĕç оккупанчĕсенчен тасалмалли малашлăха кăтартса панă. Приказ пире çĕнĕрен чаплă ĕçсем тума хавхалантарать. Аслă Сталин приказне эпир чыслăн пурнăçласа, совет çĕрне нимĕç захватчикĕсенчен хăтарăпăр.

Командирсен искусстви

Отечественнăй аслă вăрçăн 8 уйăхĕ хушшинче пирĕн çар тушканса çирĕпленчĕ. Вăхăтлăха пулнă ăнăçсăрлăхсен йывăр кунĕсем унăн боевой шухăш-кăмăлĕсене хуçма пултараймарĕç. Хаяр çапăçусенче боецсем, командирсем, комиссарсемпе политработниксем хальхи вăхăтри вăрçăн пуян опытне туянчĕç. Хĕрлĕ Çарта чи лайăх командирнăй кадрсем пуррипе вăрçă питĕ лайăх кăтартса пачĕ. Пурăнса иртнисене çине çаврăнса пăхсан, çакна куратпăр: пирĕн çарăн вăйĕ пирĕн боецсен хастарлăхĕнчен тата пирĕн командирсен çара ертсе пырас ăсталăхĕнчен пĕтĕççе тăрать. Елец хулишĕн пулса иртнĕ çапăçу ăнăçлă вĕçленессине тĕплĕн туса хатĕрленĕ план тата ăна пуçаруллăн пурнăçа кĕртни татса панă. Кунта противника вăйлă, опытлă командир Черахманов полковник шухăшĕ тăрăх çапнă. Нимĕçсен Елец хулинче вырнаçса ларнă 45-мĕшпе 134-мĕш дивизийĕсене флангсемпе тылран пырса çапнă. Противникăн чакмалли çулĕсене тытса илсе, ăна çавăрса илессипе хăратса Черахманов нимĕçсене деморализацилерĕ, унăн оборонине пăсса тăкнă. Хулана çĕмĕрсе кĕрсен, совет воинĕсем мĕнле-мĕнле объектсемшĕн çапăçмаллине лайăх пĕлнĕ. Урамсенчи çапăçусене питĕ тĕплĕн хатĕрленĕ.

Ливна хулине те флангсенчен пырса çапнипе, противник тылне кĕрсе кайнă пĕчĕк группăсем пулăшса илнĕ. Елецпа Ливна хулисем патĕнче пулса иртнĕ çапăçусем ĕнтĕ çапăçса наступлени тăвас тактикăна хушса хунă питĕ пысăк пурлăх пулса тăраççĕ. Черахманов полковникăн вăрçă ĕçĕнчи ăсталăхне тивĕçлĕ хак панă: ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă, вăл халĕ гвардейски дивизин командирĕ пулса ĕçлет.

Черахманов полковник командирсемпе политработниксен çĕнĕ кадрĕсене пĕлсе, тăрăшса воспитани парса пынă, вĕсене ответлă ĕçсене лартнă. Çапăçусенче чапа тухнă хăюллă та пултаруллă Лобанов красноармеецa взвод командирĕ туса хунă, Кузин сержанта рота командирĕ тунă; Рябов красноармеец-коммунист халĕ политрук пулса ĕçлет т. ыт. те.—Хирпăр тăйĕн те яланах вĕренсе пымалла, çынсене те яланах вĕрентмелле, вăрçă вăл—чи лайăх шкул,—тет Черахманов полковник. Вăл хăйне пăхăнса ĕçлекен командирсене кадрсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе канма пĕлмесĕр ĕçлеме хушать.

Отечественнăй вăрçă пирĕн командирсемпе политработниксен тавракурăмне чылаях сарчĕ, вĕсене питĕ пысăк пĕлӳсем пачĕ. Кунашкал пĕлӳсене нихăш шкулта та, нихăш академире те илме çук. Гришин полковник фронта опытлă командир пулса пынă, анчах та вăрçă унăшăн тактика искусствин чăн-чăн академийĕ пулса тăнă. Вăрçă ăна кашни çар специалистнех кирлĕ пахалăхсене аталантарма пулăшнă. Нимĕçсен оборонине, танкĕсен, мотопехотин тата автоматчикĕсен вăйлă чăмăрне хирĕç Гришин истребительсен хăвăрт куçса çӳрекен групписене кăларса тăратнă. Наступлени тунă чухне, тăшманăн çирĕплетнĕ пункчĕсене хирĕç çапăçнă чухне вăл хăвăрт куçса çӳрекен группăсен ĕçне флангсенчен пырса çапнипе пĕтĕçтернĕ.

Аслă Сталин пире ĕлĕкхи кадрсемпе çĕнĕ кадрсене пĕтĕçтерме вĕрентсе пырать. Пирĕн командирнăй тата политикăллă состава вĕрентсе çитĕнтернĕ çĕрте те çак положени питех вырăнлă. Çапăçу вут-çулăмĕнче командирсем пулма тивĕçлĕ таравтлă çынсем палăрчĕç. Тăван çĕршыва юратни, ăна парăнни, пирĕн ĕçĕн тĕрĕслĕхне, аслă халăхăн вăйĕпе паттăрлăхне чĕререн ĕненни—акă мĕн хавхалантарса пырать вĕсене. Акă, Ефремов хулишĕн пулнă çапăçусен геройĕ Смирнов капитан. Вăл 28 çулта çеç. Нумаях та пулмасть вăл культработник, хозяйственник пулнă, 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче çеç вăл алла хĕçпăшал тытнă. Смирнов капитан вăйлă, çирĕп, пултаруллă командир, чăн-чăн паттăр пулнине кăтартнă. Гвардейски чаçа пырса кĕнĕ хыççăн тепĕр уйăхран капитан нимĕçсен ăмпкĕтĕвĕсене аркатса тăкас тĕлĕшпе питĕ паха операци туса иртернĕ. Смирнов капитан командир пулса ертсе пыракан батальон Ефремов хулишĕн пулнă çапăçусенче вырăс хĕçпăшалĕн вăйне кăтартса панă, ăна чапа кăларнă. Çамрăк командирăн мухтавлă ĕçĕсене тăван çĕршыв пысăк хак панă. Смирнов капитана Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă, халĕ вăл гвардейски полк командирĕ пулса ĕçлет. Елец, Ливна, Ефремов хулисемшĕн тата ытти пунктсемшĕн те пулнă хаяр çапăçусенче пултаруллă çĕршер командирсем хăйсене чапа кăларнă. Вĕсем боецсене чĕререн хавхалантарма пĕлеççĕ, боецсем вĕсене шанса тăраççĕ, хисеплеççĕ.

Пирĕн командирнăй составăн ретне тăтăшах лайăх боецсенчен ӳссе çитĕнекен çĕнĕ командирсем хушăнса пыраççĕ. Пирĕн рядовой воинсем хальхи вăхăтри пек нихçан та хăвăрт та массăллăн çитĕнсе пыман. Ку ĕнтĕ вăрçă ĕçĕ тĕлĕшĕнчен те, политика тĕлĕшĕнчен те питĕ пысăк вырăн йышăнса тăракан факт пулса тăрать. Вăл пирĕн красноармеецсем шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен тата политика тĕлĕшĕнчен питĕ çӳлте тăнине, пирĕн çар пысăк пурнăç вăйĕллĕ организм пулса тăнине кăтартса парать. Халĕ пирĕн фронтра М. Р. Шамин красноармеецa питĕ лайăх пĕлеççĕ, нумаях та пулмасть фронтăн çар совечĕ ăна старши лейтенант званине панă. Çапăçури чи талăклă саманта, рота командирне амантнă пирки участокри наступлени путланса ларма тытăннă вăхăтра, çак пуçаруллă красноармеец мала тухса командир вырăнне йышăннă та ротăна пĕтĕçтерсе вăйлă чăмăр туса хунă. Вăл ертсе пынипе рота нимĕçсене вăйлăн пырса çапнă. Шамин юлташ икĕ хут аманнă пулин те çапăçăва ертсе пыма чарăнман.

Хальхи вăрçă комиссарсене массăсене воспитани паракансем çеç мар, тата тĕрĕсленнĕ, тактикăна пĕлекен, çапăçăва организацилеме, подразделение çĕнтерӳ патне илсе пыма пĕлекен руководительсем те пулма хушать. Пирĕн комиссарсемпе политработниксенчен нумайăшĕсем çакăн пек пахалăх пур. Батальоннăй комиссар Авделов юлташ халĕ полкăн чи лайăх военкомĕсенчен пĕри. Вăл, пысăк опытлăскер, çапăçура хăрама пĕлменскер, хăйĕн подразделенин чăн-чăн чунĕ пулса тăрать. Военком Авделов юлташ яланах боецсемпе пĕрле. Батальонсенче ротăсене, взводсене вăл тăшмана çĕнтерме хатĕрлет, боецсене хавхалантарса пырать.

Тăшман питĕ хаярррăн хирĕç тăрать. Ăна çапса хуçма çăмăл мар. Ăна канма пĕлмесĕр пыра-пыра çапмалла, малтанхи ăнăçусемпех лăпланса лармалла мар. Пирĕн командирсем, комиссарсемпе политработниксем çакна лайăх ăнланса илнĕ.

Ленинăн аслă ялавĕ çул кăтартса пынипе, Сталин юлташ ертсе пынипе вĕсем хăйсен дивизийĕсене, полкĕсене, батальонĕсене, ротăсене, взвочĕсене çĕнтерӳ патне илсе пыраççĕ.

Корпусной комиссар КОЛОБЯКОВ.
(«Правда», февралĕн 24-мĕш).

Бандитсем таракан çул çинче

Январĕн малтанхи кунĕсем. Сивĕ, çил. Сивви—хăшпĕр кунсенче 45—50 градуса çитет. Хĕрлĕ Çарăн малалла, хĕвеланăçнелле, пыракан чаçĕсене «никам çĕнтереймен» Гитлер çарĕ те, хаяр сивĕ те чараймасть. Хĕрлĕ Çарăн Çурçĕр-Хĕвеланăç тата Калинин фрончĕсенчи войскисем нимĕçсен вăйлă укреплениийĕсене çĕмĕрсе тăкса нумай хуласене тата ялсене захватчиксен пусмăрĕнчен хăтарнă. Наступлени малалла пырать. Гитлерăн бандитла çарĕ нисçта чарăнмасăр тарать.

С. ятлă ял кӳлĕ хĕрринче, сăртлă вырăнта ларать. Нимĕç оккупанчĕсем С. ялĕнчен Т. ятлă ял патне çитиччен вăйлă укрепленисем тунă. Кӳллĕн тепĕр енчи Н. ялĕнче те, унăн таврашĕнче те—фашистсен укреплениийĕсем. Çак ялтан пысăк шоссе çулĕ пуçланса каять. Çакăнти ялсемпе куласене фашистла бандитсем тăватă уйăха яхăн пусмăрласа тăнă. Выçă аптранă тата шăнса хытăркаçнă фашистла салтаксене çантаăк ăшăтсан каллех пирĕн тăван çĕршыва малалла çĕмĕрсе кĕме хатĕрленĕ. Çак çирĕплетнĕ линие «Маккино линийĕ» тенĕ, ăна Хĕрлĕ Çар çĕмĕрессине фашистла бандитсем шутламан.

Анчах Хĕрлĕ Çар чаçĕсем, январĕн малтанхи кунĕсенче наступлени пуçласа, гитлеровецсен планне аркатса пăрахрĕç. Пирĕн войскăсем нимĕç бандичĕсене, нисçта чарăнма памасăр, Хĕвеланăçнелле хăваласа пыраççĕ. Бандит хăйĕн вилĕм шăтăкнелле тарать.

Пирĕн подразделени фронтăн малти хĕçпăшалĕсене продовольстви тата хĕçпăшал çитерсе пама приказ илчĕ. Çурçĕр иртсен икĕ сехет тĕлнелле пысăк обоз çул çине тухрĕ. Пирĕн боецсем вырнаçса тăнă ялсенчен иртсенех, малта, пилĕк-ултă çĕрте, пĕлĕт çинче хĕп-хĕрлĕ лаптăк паллисем курăнчĕç. Ку паллăсем Гитлерăн бандитла çарĕсем каялла чакнине пĕлтереççĕ. Каялла тараккан гитлеровецсем халиччен хăйсем вырнаçса тăнă С., Н., К. ялĕсене вут тивертсе янă. Пирĕн обоза çав ялсем витĕр тухса каймалла. Фронта васкавлă груз илсе çитермелле.

• • •

С. ялне кĕриччен чылаях пысăк вăрман витĕр тухмалла.

Кӳлĕ хĕрри. Кунтан пирĕн Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем фашистла бандăсене ялтан хĕссе кăларма атакăланă. Нимĕçсем колхозăн витисене, ферма çурчĕсене, шкула, клуба вут тĕртсе çунтарса янă та, тĕтĕм хӳттипе усă курса, ялтан тухса тарнă. «План тăрăх, фронт линине тӳрлетме каялла чакакан» гитлеровецсем пĕр пысăк мар ялах 30 ытла автомашина, темĕн чухлĕ хĕçпăшал пăрахса хăварнă. Бандит аптăраса пурăннă 96 киллĕ ялтан пирĕн обоза вырнаçса ăшăнмалăх çурт та юлман. Ял çуннă,—эпир тухса кайнă чухне те çунать. Бандитсем тараççĕ. Çул çине вĕсем салтаксемпе офицерсен виллисене ["]шарĕн пăрахса хăвараççĕ. Пирĕн çунасем фашистсен шăнса хытнă виллисене шăк-шак пересе иртсе каяççĕ. Боецсем нимĕç бандичĕсем пăрахса хăварнă винтовкăсене, пистолетсене илсе çуна çине хураççĕ.

С. ялĕнчен тепĕр С. ялне кӳлĕ урлă, пăр çийĕпе каçмалла. Вĕсен хушши 8 километр кăна. Нимĕçсем те çак кӳлĕ урлă каçса Х. хулине каякан шоссе çулĕ çине тухнă... Тухнă çав та,—ăнăçлă пулман. Пирĕн çĕлтĕрçĕсем тата Т. ятлă ял çывăхĕнчи вăрмана вырнаçтарнă артиллери нимĕçсен çулне пӳлсе лартнă. Нимĕçсем, çак кӳлĕ çине вуншар автомобиль, темĕн чухлĕ хĕçпăшал пăрахса хăварса, хăйсем ăçта май килнĕ çавăнталла тарса пĕтнĕ. Вĕсен штабĕн автобусĕ, кухни тата ыттисем те пирĕн малалла каймалли çула картласа выртаççĕ.

— Ха, пăхăр-ха, йытă виллисем выртаççĕ,—тет малтанхи кунсенче нимĕç самолечĕсен сассине илтсенех лашине пăрахса таракан, халĕ вĕсем пулеметран пенинчен те шикленми пулнă Дюкин юлташ.

— Йытăсене—йытă вилĕмĕ! Вĕсене вĕлерме хăйсен пистолечĕсене кăларса илтĕм эпĕ,—тет хăюллă боец Кудрявцев.

Кӳлĕ урлă каçнă чухне пирĕн обозниксем нимĕçсен тăкăнса юлнă машинисемпе виллисене шутларĕç. Пĕр пĕчĕк кӳлĕ çинчех 8 машина, 35 виле выртать.

• • •

Кӳллĕн тепĕр енчи яла пырса кĕнĕ чухне унта шкул çуртĕ тата темиçе пӳрт çунни курăнать. Нимĕçсем ку ялтан эпир çитиччченхи малтанхи кун каçхине тухса тарнă. Анчах та вĕсем чĕртсе хăварнă пушар çаплах та чарăнман-ха.

Урамра 3—4 çын кăна. Пĕр старикрен малалла ăçталла, хăш çулпа каймаллине ыйтса пĕлетпĕр. Старик, аллинче пĕр вунвиçĕ çулалли ачана тытса тăрса, çунса кăмрăкланнă çурчĕ патĕнче куççуль юхтарсах макăрать.

Карчăкпа тата çак ачапа аран-аран çăлăнса юлтăмăр... Фашистсем, пӳрте тултан çăрапа питĕрсе, тивертсе ячĕç. Хăйсем машина çине ларса тарчĕç,—тет вăл.

С. ялĕнчен шоссе çине тухиччченхи юлашки çурт. Унта нимĕçсен хĕçпăшал склачĕ пулнă. Склада мĕн хуни вĕсен пурте çавăнтах тăрса юлнă. Пулеметсем, минометсем, автоматсем, минăсем, патронсем, гранатăсем, мотоциклсем,—пурне те пăрахса хăварнă бандитсем.

Çак ялтан эпир фитес вырăн тата 30 километрта тăрать. Шоссе çулĕпе каймалла. Нимĕçсем тарнă хыççăн ку çулпа никамах та çӳремен. Шикленмелле. Çул хĕрринчи блиндажсенче тата вăрманта пытанса юлнă бандитсем шулма пултараççĕ. Обозник-боецсем кунта та хăнăхса çитеççĕ. Фашистсен виллисене курсан, вĕсем хăйсене татах хăюллăрах, шиксĕртерех туяççĕ. Пурте обоза сыхлама панă хĕçпăшала яланах хатĕр тытатпăр.

30 километрлă çул тăршшĕне çĕрле кайрăмăр. Шоссе вăрман витĕр выртать, çул çинче çӳреме кансĕр, тăршшĕпех нимĕçсем пăрахса хăварнă машинăсем кансĕрлеççĕ, вĕсене пуçтарма тытăнман-ха.

— «План тăрăх чакакан, фронт линине тӳрлетекен» фашистсем çапла чакаççĕ иккен,—чакаççĕ мар, тараççĕ вĕсем!—теççĕ манăн боецсем.

— Гитлер капут, рус.. Рус бьет нас,—теççĕ чĕтресе тăракан, алли-ури шăнса хытнă, тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем.

Эпир каялла таврăннă тĕле С. ялĕнчен инçех мар, вăрмантан тухнă, анчах яла çитиччен шăнса хытнă нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 15 вилли выртать.

Хытнă вĕсем, пĕтнĕ. Бандитсен шăпи çапла.

Политрук Р. ШАШКОВ.
Действующи арми.

Пулас специалистсем

Вĕсене халиччи кунек ирхине урам тă-рăх стройпа пынине куратăн. Боецсем пекех утаççĕ вĕсем: пĕр-пĕрине халаç-маççĕ, хăйсене тÿрĕ тытаççĕ.

Вĕсем—ФЗО шкулĕнче вĕренекенсем, занятие каяççĕ.

Çĕмĕрлери ФЗО шкулĕ промышлен-ность предприятийĕсем валли кадрсем хатĕрлес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл кĕске вăхăт хушшинчех, производство йĕркине пĕлмен çамрăк-сене плотник, станочник, слесарь, сто-ляр, электросварщик, токарь-фрезеров-щик пулса ĕçлеме вĕрентсе кăларать. Ку таранччен шкул промышленность валли 600 çамрăка квалификациллĕ ра-бочисем пулма вĕрентсе кăларчĕ. Вĕсем халь тĕрлĕ çĕрти предприятисенче ĕçлеççĕ.

ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă çам-рăксем производствăра ĕç тухăçлăхне хăпартас, продукци пахалăхне лайăхла-тас, чĕртавара перекетлĕн усă курас тĕлĕшпе пример кăтартаççĕ.

Комсомолец Александр Еремеев пĕр-ремĕш наборта станочниксен отделе-нинче вĕреннĕ, ăна древкомбината хă-варнă. Халĕ вăл хăйĕн ĕç нормине икĕ хут ирттерсе тултарать. Унпа пĕрле вĕ-ренсе тухнă отличник Емельянов та нормăна ирттерсе тултарать, лайăх па-халăхлă продукци парать.

Муратовпа Иванов юлташсем ФЗО шкулĕнчен IV-мĕш разрядпа вĕренсе тухнă. Производствăна куçсан, вĕсем технологи процесне хăвăрттăн хăнăхса, тухăçлăн ĕçлеме пуçланă, çавна кура вара вĕсене часах пысăкрах разрядсене куçарнă. Паянхи куна Муратов — 6-мĕш разрядпа, Иванов—5-мĕш разрядпа ĕç-лесе нормăсене 150 процент таран тул-тарса пыраççĕ.

— Лайăх ĕçлеççĕ, ырлама тивĕçлĕ,— теççĕ вĕсем çинчен рабочисем.

* * *

Çак уйăхăн малтанхи кунĕсенче шкулта виççĕмĕш набора вĕренме илни-сен занятийĕсем пуçланчĕç. Ку наборта 500 çынна вĕренме илнĕ. Вĕсенчен столяр-сем пулма 160 çын, платниксем пулма 80 çын, станочниксем пулма 40 çын та-та электросварщиксемпе токарь-фрезе-ровщиксен групписенче кашнинчех 30-шар çын вĕренеççĕ.

Хальхи набсрăн малтанхи кунĕсенче уйăрăмăнах вĕренекенсен производствă-ра ĕçлес хастарлăхĕ пысăкки уççăн па-лăрчĕ. Занятисем пур группăсенче те тенĕ пекех çирĕп расписани тăрăх вă-хăтра тата организованно пулса иртеç-çĕ. Слесарьсемпе столярсем валли шкул çуртĕнчех мастерской организацилене, ытти группăсенче вĕренекенсем произ-водствăллă практикăна древкомбинат цехĕсене çÿреççĕ.

Шкул юнашни группа валлиех квалифи-каллĕ мастерсем хатĕрленĕ. Фрезеров-щиксен группине комбинатри паллă ста-хановец, СССР вăрман промышленность халăх комиссариачĕн «Отличнику лес-ной промышленности» значек илнĕ Бой-ков юлташ ертсе пырать. Мастер ком-мунист Бывалов та хăйне шанса панă ĕçе хисеплĕн туса пырать, иртнĕ на-борсенче унăн группинчен яланах вĕре-некенсем «отлично» е «хорошо» паллăсем-пе вĕренсе тухнă. Вĕренекенсем хуш-шинче вăл пысăк авторитетпа усă ку-рать, ăна пурте ырлаççĕ, хисеплеççĕ.

Ытти наборсенче хĕрачасем пулман, виççĕмĕш наборта шкула хĕрачасем те чылай килнĕ. Паянхи куна 125 хĕрача тĕрлĕрен специальнăçсем илме хатĕрле-неççĕ, вĕсенчен чылайĕшĕсем 6—7 çул вĕренсе тухнисем. Акă Ваçкино ялĕнчен (Етĕрне р.) килнĕ Антонина Кузьмина 7 çул вĕренсе тухнă, вăл халь слесарь пулма вĕренет.

— Эпĕ производствăра ĕçлеме тахçа-нах ĕмĕтленнĕ, иртнĕ çултах ФЗО шкулне вĕренме кĕме шутланăччĕ, анчах хĕрачасене илмеççĕ, терĕç. Вара иртнĕ çура колхозрах ĕçлеме лекрĕ, пĕтĕмпе иртнĕ çулта эпĕ 100 ĕçкунĕ турăм. Халĕ акă эпĕ ĕмĕтленни пурнăçа кĕрет. Часах вăхăт çитĕ, эпĕ станокпа ĕçлĕп, стаха-новка пулăп, çавăншăн мĕнпур пулта-рулăхпа вĕренетĕп,—тет Антонина Кузьмича.

Çакăн пек шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ унăн ытти юлташĕсем те. Кашниех вĕ-сем профессие хăвăртрах вĕренсе çит-се, цеха харпăрхăй тĕллĕн ĕçлеме куç-ма ĕмĕтленеççĕ. Ку çеç те мар, произ-водствăна куçсан вĕсем стахановла ĕç-леме пулаççĕ.

Геннадий Тарасов 16 çула кăна кай-нă-ха, вăл Элĕк районĕнчен килнĕ, шкулта 5 çул вĕреннĕ. Чăн малтанах ФЗО шкулне пырсан, вăл мĕнле спе-циальность илме кăмăл туни çинчен ыйтса пĕлнĕ.

— Маншăн пурте пĕр пекех пек, ярăр столяр пулма. Хаçатсем çинче эпĕ вĕ-сем рекордла çитĕнÿсем туса ĕçлесси çинчен вуланăччĕ,—тенĕ Геннадий.

Тĕрĕс калать çамрăк патриот. Совет çĕршывĕнче кирек мĕнле ĕç те пысăк хисепре. Тăрăшса, вăя хурса ĕçлесен, хăть те мĕнле участокра та чыса тухма пултаратăн.

Хальхи вăхăтра отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче Хĕрлĕ Çар воинĕсем гитлерла вăрă-хурахсене хирĕç паттăр-рăн çапăçаççĕ, çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ туса пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар тăвакан çĕнте-рÿсем çамрăксене питех те хавхаланта-раççĕ. Çавăнпа вĕсем хăвăртрах профес-си илессишĕн, специальность илсе, фронта кайнă тата каякансен вырăнне тăрса ĕçлеме хатĕрленеççĕ.

Х. ЛИСИН.

Выранти промышленность ĕçне—çÿлĕ пусăма!

Вырăнти промышленносăн чылай предприятийĕсем, хăйсен производстви-не вăрçă обстановки ыйтнă пек уйăх-латса, Хĕрлĕ Çара кирлĕ васкавлă за-казсене пурнăçлама тытăнчĕç. 1941 çулта пирĕн республикăри промыш-ленность предприятийĕсем çунасемпе йĕлтĕрсем тумалли васкавлă заказсе-не ытлашшипех пурнăçларĕç. Ку ĕçре уйрăмăнах Шăмăршăпа Сĕнтĕрвăрри районĕсем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç.

1942 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă, Кус-лавкка районĕсенчи промкомбинатсем тата Канашри, Çĕмĕрлери индпошив мастерскойĕсем çулталăк планне чы-лай ирттерсе тултарчĕç. Ку предприя-тисенче вăхăта шутламасăр ĕçлекен патриотсем, стахановецсемпе двухсот-никсем сахал мар. Сĕнтĕрвăрринчи райпромкомбинатра кулленхи нормăна 200—350 процент таран тултарса ĕçле-кен рабочисемпе работницăсем вун-шарăн, çĕршерĕн шутланаççĕ. Рабочи Федоров юлташ сменăри нормăна 390 процент таран тултарса пырать. Лебе-дев, Денисов, Акулин, Копылов юл-ташсем кулленхи нормăна 340—380 процент таран тултарса пыраççĕ. Пи-тин, Дубман, Шевнин, Ефремов, Мут-русков тата ытти юлташсем те сме-нăри нормăна 300—320 процент таран тултараççĕ. Шăмăршă райпромкомби-натĕнче васкавлă заказсене пурнăçла-нă çĕрте ĕçлекенсем Спиридоновпа Корчагин юлташсем сменăри нормăна 200—212 процент таран тултараççĕ.

Васкавлă заказсене пурнăçласа пы-нипе пĕрлех ĕçхалăхне куллен кирлĕ продукцие туса кăларас тĕлĕшпе те вырăнти промышленность ответлă пул-са тăрать. Ку енчен хăшпĕр предприя-тисем чылай çитĕнÿсем турĕç. 1941 çулта вырăнти промышленность, ирт-нĕ çулпа танлаштарсан, продукци 1620 пин тенкĕлĕх ытларах туса кă-ларнă. Ĕçхалăхне куллен кирлĕ тавар-сем туса кăларас тĕлĕшпе çĕнĕ пред-приятисем, мастерскойсем тата ытти те уçăлнă: тăмран чашăк-тирĕк тăва-кан мастерской, урапа-çунасем тăва-кан мастерскойсем т. ыт. те.

Анчах вырăнти промышленность системинче кая юлса пыракан пред-приятисем те пур-ха. Çавна пула 1941 çулта вырăнти промышленность плана тултарайман, Вăрмар, Советски, Калинински, Тăвай, Ишлей, Пăрачкав районĕсенчи промкомбинатсем 1941 çулта çунасем тумалли васкавлă за-каза тултараймарĕç.

Промышленность предприятийĕсем производствăллă плана вăхăтра тул-тарса пычăр тесе вырăнти промыш-ленность Наркомачĕпе райпромкомби-нат руководителĕсен çеç мар, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсен те тăрăшмалла.

Партин XVIII-мĕш конференцийĕ ун çинчен çапла каласа хăварнă: «Пред-приятисен ĕçне, наркоматсен решени-йĕсене пурнăçа кĕртсе пынине пĕр наркоматсем кăна тĕрĕслесе пыма пул-тараймаççĕ. Çавăнпа парти организа-цийĕсен наркоматсен директивисене предприятисем пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслес ĕçре, урăхла каласан, пред-приятисен директорĕсен ĕçне контроль-лес ĕçре наркоматсене пулăшу па-малла».

Çак кăтартăва пурнăçласа пырас тĕлĕшпе парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем пурте мар çителĕклĕ ĕç-леççĕ.

Канаш районĕнче урапа-çунасем тă-вакан тата тăмран чашăк-тирĕксем тăвакан мастерскойсем валли тума тытăннă çуртсене складсем туса хунă.

Калинински районра сĕтел-пукансем тăвакан мастерской çуртне туса пĕтер-нĕ, анчах унпа райпромкомбинат усă курмасть. Ăна лесхоза панă.

Çĕрпÿ, Шупашкар районĕсенче тăм-ран чашăк-тирĕксем тăвакан мастер-скойăн тата Йĕпреç районĕнче хуçа-лăхра куллен кирлĕ япаласен мастер-скойĕн çурчĕсене 2 çул хушши ĕнтĕ туса пĕтереймеççĕ.

Етĕрнери райпромкомбинат та хăйĕн планне тултарса пыраймасть. Кирпĕч заводне сезона вăхăтра хатĕрлеме шутламасть. Кирпĕч типĕтмелли сарая, преса тата ытти çуртсене те юсама тытăнман.

Кирпĕч завочĕсене сезона хатĕрлес тĕлĕшпе ытти районсенче те ĕç мух-танмаллах мар-ха. Сăмахран, Шупаш-кар хулинчи, Канаш, Çĕмĕрле районĕ-сенчи кирпĕч завочĕсенче топливо ха-тĕрлемен, ĕç вăйне хатĕрлеме те ты-тăнман, ремонт тума кирлĕ материал-сене завода илсе пыман.

Канаш районĕнче кирпĕч типĕтме икĕ сарай тума пуçланă, анчах ку таранах çитсе пĕрине те туса пĕтермен. Рабочисем валли общежитисем тума тытăнман.

Çак çитменлĕхсене пирĕн халех пĕтерес пулать.

1942 çулта вырăнти промышленность умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама вырăнти промышленность системинчи пур предприятисен те, çавăн пекех наркоматăн та пĕтĕм вăя хурса ĕçлени кирлĕ. ВКП(б) райкомĕ-сен тата райсовет исполкомĕсен ра-йонри промышленность предприяти-йĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе пулăшса пымалла. Районри промышленноçа малалла сарса пыма вырăнти пур ресурссемпе те туллин усă курмалла. 1942 çулти производствăллă плана ыт-лашшипех тултарассишĕн большевикла кĕрешмелле. Çавна тума пирĕн усло-висем çителĕклĕх.

П. ВАСИЛЬКОВ.

Чăваш АССР Вырăнти про-мышленность халăх комиссарĕ.

Сурăх сĕтне суса брынза тăвар

Апат-çимĕç ытларах тумалли майсен-чен пĕри—вăл сурăхсен тата качака-сен сĕтне суса, вĕсенчен тĕрлĕ çимĕç-сем тăвасси пулса тăрать.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, кашни колхо-зăн 1942 çулти сентябрĕн 1-мĕшчен го-сударствăна кашни гектар çĕр пуçне 25-шер грамм, колхозниксен хăйсем ус-ракан кашни сурăхран 375-шер грамм, уйрăм хресченсен кашни сурăхран 500 грамм брынза чăкăт туса памалла.

Çакă вăл уйрăмах халĕ, отечествен-нăй вăрçă вăхăтĕнче, питĕ пысăк вы-рăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен халĕ кашни килограмм апат-çимĕç шутлă. Çитменнине тата брынза чă-кăт паха апат, ăна кирек ăçта турттар-са илсе кайма та пулать. Çак ĕç çине тата акă мĕншĕн тимлесе пăхмалла: ăна Чăваш республикинче чи малтан пуçласа тăваççĕ тата брынза-чăкăт туса хатĕрлемелли срокĕ те кĕске: ăна май-август уйăхĕсем хушшинче туса çитермелле. Çавăнпа та районсенчи çĕрĕç пайĕсен, колхозсен тата Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн су-рăхсене сăвас ĕçе тата брынза-чăкăт тăвакан пунктсене организацилеме ха-лех тытăнмалла.

Ку тĕлĕшпе чи малтан çак ĕçсене тумалла:

Кашни колхозăн брынза тума мĕн чухлĕ сурăх сĕчĕ памаллине план туса, ăна кашни колхозник, кашни уй-рăм хресчен килĕ патне çитермелле.

Районсенчи зоотехниксен колхозник-сем хушшинчен районсенчи инструк-торсем вĕрентсе хатĕрлемелле тата кашни колхозра сурăх сĕтне сăвакан-сене уйăрса, вĕсене вĕрентсе ĕçе хă-нăхтармалла.

Сума тивĕçлĕ сурăхсене уйăрса ху-малла. Сĕт тытмалли кирлĕ савăт-сапа хатĕрлемелле, çуллахи вăхăт вал-ли пăр касса хатĕрлесе хумалла тата сĕт сумалли станоксем тумалла.

Брынза-чăкăт тумалли пункта туса, унта кирлĕ хатĕрсене хатĕрлемелле.

Çак ĕçсене пурне те апрелĕн 1-мĕш-чен туса çитермелле, майăн 1-мĕшĕн-чен пуçласа пур çĕрте те сурăхсене суса, вĕсен сĕтĕнчен брынза-чăкăт тума тытăнмалла.

Сĕтне сăвиччен те, сунă вăхăтра та сурăх лăпкă пулсан, вăл сĕт те ытла-рах парать, сума та çăмăл. Сурăхсене сăвас ĕçе кирлĕ пек йĕркелесен, каш-ни сурăх сĕтне сутарма 3—4 кунтан хăнăхса çитет, вăл кунне 400—500 грамм таран сĕт пама пултарать.

Сăвас умĕн сурăх çилли шыçнипе шыçманнине, сурăх çинче хуртсем е пыйтă-шăркасем пуррипе çуккине тĕп-лĕн тĕрĕслемелле, вĕсем палăрсан, çав сурăха ыттисенчен уйăраççĕ, унăн чирне, пыйтă-шăркисене çийĕнчех пĕ-термелле.

Сурăха çăмĕнчен ярса тытма е лу-тăркама юрамасть. Ăна уринчен е мă-йĕнчен тата купарчинчен тытмалла. Сĕтне сунă чухне тасалăх кирлĕ: алă-сем таса пулмалла, чĕрнесене касмал-ла, кашни сĕт сăваканӑн таса халат тата шурă алшăлли пулмалла.

Сурăхсене кунне икĕ хут сăваççĕ: ирхине 4—6 сехетсенче тата каçхине 7—9 сехетсенче.

Сурăха хыçалтан сăваççĕ. Малтанлă-ха хăрах алăпа çилĕрен тытмалла, теприпе чĕчĕсене пăчăртаса сĕтне су-малла. Чĕчĕ çурăласран икĕ пÿрнепе ерипен чăмăртаса сĕт тухиччен ая-лалла сăтăрса çăмăллăн туртас пулать. Сĕтне антарма тытăнсан вара, ик алă-па пĕтĕм çилĕрен çиелтен тытса майĕ-пен аялалла пăчăртаса сĕте витре çи-не сумалла. Çакăн хыççăн, суса пĕте-рес умĕн, каллех, малтанхи пекех, хă-рах алăпа сума тытăнмалла.

Сурăхсене сунă чухне шăплăх пул-тăр тата ют çынсем ан пулччăр. Каш-ни сурăха 2 минута хушшинче суса пĕтермелле.

Брынза-чăкăт лайăх, таса пултăр тесен, сĕт те таса пулмалла. Çавăнпа та сĕт витрисемпе каткисене таса тытмалла. Сунă вăхăтра сĕт витрисем çине марлĕ икĕ хут витмелле. Сĕт витрисем çинчен каткасем çине кашни 3—4 сурăха сунă хыççăн пушатсан аван.

Сăвакан сурăхсене тăвар парсан, усăллă. Вĕсене талăкра икĕ хутран кая мар шăвармалла тата чи лайăх курăк çинче кĕтмелле.

В. СОЛОВЬЕВ.

Ялхуçалăх наукисен кандидачĕ.

Колхозниксен хастарлă ĕçĕ

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче пи-рĕн колхоз членĕсем пĕтĕм ĕçе фронт интересĕсемшĕн туса пыма тăрăшаççĕ. Хальхи вăхăтра Хĕрлĕ Çар тăвакан çĕнтерÿсем вĕсене татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Паянхи куна колхозра çуракине ха-тĕрленес ĕç тĕп вырăнта тăрать. Ка-лас пулать, ку тĕлĕшпе эпир чылай ĕçсем турăмăр та ĕнтĕ: вăрлăхсене пурне те çителĕклĕ таран сортланă. плугсемпе сÿресене юсаса хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне тата уя 600 лав тислĕк кăларнă, 15 центнер кĕл, 4 центнера яхăн кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Ку ĕçсем малалла та анлăн саралса пыраççĕ.

Пирĕн колхозниксем ĕçе тиркемеççĕ, вĕсемшĕн пулсан хăть те мĕнле ĕç пултăр, вĕсем ăна кĕске срокра тата пысăк хăвăртлăхпа тăвассишĕн кĕре-шеççĕ. Нумаях пулмасть çапла тырă сортлама Е. Матюшкинăпа Т. Умовăпа т ыт. колхозницăсене хушрăмăр. Вĕ-сем ир пуçласа каçчен колхоз итемĕ-сем çинче ĕçлерĕç. Норма тăрăх триерпа кунне 1 тонна сортламалла пулсан, вĕсем 1,5-шар тонна сортласа пычĕç.

С. Хорасьвинпа З. Федоров колхоз-никсем конюхсем пулса ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах кашни кун вĕсем уя иккшер лав тислĕк кăлараççĕ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пахча-çимĕç бригади те (бригадирĕ П. Ксен-цов юлташ) тăрăшса ĕçлет. Ку таранч-чен çимĕçсем лартмалли вырăна 350 лав тислĕк кăларнă, пур культурăсем тăрăх та вăрлăхсене çителĕклĕ таран хатĕрленĕ. Кăçал бригада 3 гектар çине купăста, 2 гектар хăяр, 1,5 гектар помидор, 1 гектар арбуз тата ыт. те лартма хатĕрленет. Çитес вăхăтрах, ак, парниксем çинче ĕç пуçланать, халĕ вĕсене тасататпăр, теплицăсене ăшăтаççĕ.

Паллах, пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те пур. Паяна çитиччен эпир лаша тав-рашĕсем тата урапасем кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе çитерейменрĕмĕр. Ку уйрăмах акара пысăк чăрмав кÿме пултарать. Çавă ан пултăр тесе, эпир çитес вă-хăтрах лаша таврашĕсемпе урапасем хатĕрлес, киввисене юсас ĕçе тимлĕн-рех тытăнатпăр. Лашасем пирĕн çите-лĕклĕ, вĕсем валли фураж та кирлĕ чухлех хатĕрленĕ.

С. РОМАНОВ,

Çĕмĕрле районĕнчи «Волга» колхоз председателĕ.

Пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр., телефонпа). «Труженик» заводри рабочисемпе ра-ботницăсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна производствăра пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илчĕç. Паллă стахановец Н. Пантюхин юлташ куллен 5 мăшăр йĕлтĕр туса кăларас вырăнне 7-шер мă-шăр туса кăларать, уйрăм кунсенче 10—12 мăшăр таран тăвать. Февральти 20 кун хушшинче вăл уйăхри плана 113 про-цент ытла тултарнă. Çавăн пекех Н. Сергеев, А. Калентьев, В. Салкин юлташсем те кулленхи нормăна 150 про-цент ытла тултарса пыраççĕ. Калентьев юлташ февралĕн 18-мĕшĕнче сменăра 18 мăшăр йĕлтĕр туса кăларнă. Салкин юл-таш февралĕн 19-мĕшĕнче 5 сехет хуш-шинче сменăри нормăна 140 процент тултарнă. Çавнашкалах станочницăсем те ĕçре пысăк хастарлăх кăтартаççĕ. О. Зубрилина, Е. Мельникова, Н. Гончу-рова, С. Яхасова юлташсем пĕр браксăр, пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ.

Древкомбинатри рабочисем те Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна çитĕнÿсемпе паллă тăваççĕ. Ремонт тăвакан механи-чески цех январь уйăхĕнчи плана 135 процент тултарнă. Февраль уйăхĕнчи плана та Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун тĕлне ытлашшипех тултарчĕç.

Стахановецсем Н. Моисеев, С. Шоло-мов юлташсем кулленех иккшер норма тултарса ĕçлеççĕ. Токарь Ярсаев юлташ сменăри нормăна 180—200 процент таран тултарса пырать.

Хăма çуракан цехри Степанова, Сур-ков, Данилова юлташсен бригадисем те кулленхи ĕç нормине 180—210 про-цент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Финагентсен çитĕнĕвĕсем

СĔНТĔР. Районри финанс работникĕ-сем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пĕр-ремĕш кварталти финанс планне 90 процент таран тултарма пулăччĕ. Сĕнтĕр районĕ ку тĕлĕшпе Ишлей ра-йонĕпе ăмăртать. Халĕ районра укçа-тенкĕ пухас ĕç вăйлансах пырать.

Ăмăртура уйрăмăнах Кăпас ялсове-тĕнчи финагент М. Орлов юлташ мал-та пырать. Пĕрремĕш карталти укçа-тенкĕ пухмалли плана вăл 109 про-цент тултарнă. Орлов юлташ СССР Верховный Совет Президиумĕ вăрçă вăхăтĕнчи налог çинчен кăларнă Ука-за колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса панă хыççăн, çав налогăн укçине 13 пин тенкĕ ытла пухнă. Вăл Урпаш ялсовечĕн финагенчĕпе ăмăртса ĕçлет. Ку ялсоветĕнчи финагент та Орлов юлташпа танлашма тăрăшать, вăл пĕрремĕш квартал планне 97 процент пурнăçланă.

Анчах районри уйрăм ялсовечĕсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Сăмахран, Ильинка, Тюмерин ялсовечĕсем ку тĕлĕшпе кая юлса пыраççĕ.

С. НАЛИМОВ.

Халăх пуçарулăхĕн вăйĕ

Хĕрлĕ Çар çĕнтерÿсем тунн тылри ĕç фронтĕнче ĕçлекенсене пысăк çитĕ-нÿсем тума хавхалантарать. Халĕ ĕн-тĕ пирĕн кашни ĕççынни пур майсем-пе те Хĕрлĕ Çара пулăшса пыма тă-рăшать. Кашни тÿрĕ кăмăллă совет гражданинĕ хăйĕн юратнă çĕршывне хÿтĕлени, унăн вăя хуни пархатар-лă ĕç пулнине аван пĕлсе тăрать. Акă мĕн пирки ĕнтĕ пирĕн тылри рабочи-сем, колхозниксем тата интеллигенци хăйсен кулленхи ĕçĕсене вăя шелле-месĕр туса тăраççĕ.

Советла патриотизмăн хăвачĕ уйрă-мăнах хальхи кунсенче, аслă оте-чественнăй вăрçă вăхăтĕнче уççăн ку-рăнать. Ĕçхалăхĕн вăйлă патриотизмĕ хальхи вăхăтра çĕршыв оборонипе фронтшăн тăвакан тĕрлĕ ĕçсенче ку-рăнать. Пирĕн ĕçхалăхĕ оборона фонд-не тăвать, производствăри ĕç тухăç-лăхне каличчен курман виçене хăпар-тать, Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухать, тырă, аш-какай тата ытти продуктсем те пухса вĕсене фронта ярса парать; рабочисемпе служащи-сем оборона фондне хăйсен пĕр кунхи ĕç укçине кашни уйăхрах уйăрса па-раççĕ, заем укçине срокчен тÿлесе та-таççĕ, шкул ачисем ămел тумалли йы-вăç-хурăк, тимĕр-тăмăр, утиль пухса параççĕ, колхозниксем государство умĕнчи парăмсене срокчен татса фи-нанс планĕсене ытлашшипех тулта-раççĕ т. ыт. те. Нумай пулмасть, «Цивильстрой» колхоз членĕсем пу-çарнипе, пирĕн республикăра Хĕрлĕ Çар валли уйрăм колхозниксен хуçа-лăхĕнче выльăх-чĕрлĕх самăртса па-рас ĕç пуçланса кайрĕ. Ку ĕнтĕ тă-ван çĕршывăшăн тăвакан çавтери чаплă та пархатарлă ĕç. «Большевик» пром-артельри çамрăксем пуçарнипе рес-публикăра Чăваш комсомолĕ ячĕпе бронепоезд тума укçа пуçтарас дви-жени саралса кайрĕ. Ку бронепоезда тума ĕнтĕ миллион тенкĕ ытла пухнă.

Совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывĕ-шĕн хавхаланса ĕçленине эпир граж-дан вăрçипе социализм строительст-вин çулĕсенче те курнă, анчах та хальхи патриотизмлă çĕкленÿ хăйĕн вăйĕпе пуринчен те ирттерет.

Пирĕн предприятисенчи рабочисем халĕ кунĕн-çĕрĕн, ырми-канми ĕçлесе производствăра пысăк çитĕнÿсем туса пыраççĕ, вĕсем хушшинче двухсотник-сен, трехсотниксен йышĕ кунран ку-нах ÿсет. Канашри вагонсем юсакан заводри Журба юлташ ертсе пыракан слесарьсен бригади, специальнăй за-данипе ĕçленĕ чух, январĕн малтанхи çуруйăхĕнче виçĕ норма тултарса пы-нă, иккĕмĕш çуруйăхра вăл заданине 357 процент тултарнă. Ку заводра ха-лĕ вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсем вуншарăн шутланаççĕ, вĕсем хушшин-че А. Алексеев, Петров, С. Федин, Галкин, Миронов тата ытти юлташсен ячĕсем палăрса тăраççĕ.

Рабочисен тата инженерсемпе тех-нически работниксен творчествăллă шухăшĕ те ÿссех, саралсах пырать. Вăрçă вăхăтĕнче фабрикăсемпе завод-сенче рационализаци тĕлĕшпе паракан сĕнÿсем нумайланчĕç. Пĕр Канашри вагонсем юсакан заводрах, иртнĕ сен-тябрьтен пуçласа кăçалхи январе çи-тиччен пурĕ 61 сĕнÿ панă. Çак сĕнÿ-сене пурнăçа кĕртни государство ук-çине çуллен 116-250 тенкĕ перекетлесе хăварма пултарать.

Предприятисенчи рабочисем фронто-вой бригадăсем организацилерĕç. Çак бригадăсем хăйсен малтанхи кунĕсен-чех ĕç тухăçлăхне хăпартнине кăтарт-са пачĕç. Чернухин комсомолец ертсе пыракан фронтовой бригада январьте 87 сехетре юсаса пĕтермелли вагона 29 сехет хушшинче юсаса кăларчĕ.

Улатăрти паровозсем юсакан завод-ри тимĕрçĕ Ф. Макшанов хăйĕн произ-водство заданийĕсене пĕрмаях темиçе хут ирттерсе тултарса пырать, хăш-пĕр кунсенче вăл 10 норма таран тул-тарать.

Оборона ĕçне пулăшмалли формăсен-чен пĕри вăл воскресник пулса тă-рать. Воскресник йĕркипе ĕçлесси пи-рĕн çĕршывра юлашки вăхăтра питех те анлăн саралса кайрĕ. Воскресник-сем граждăн вăрçи çулĕсенче халăх пуçарăвĕпе саралнă коммунистла суб-ботниксем пек пулса иртеççĕ. Граж-дăн вăрçи вăхăтĕнче совет патриочĕ-сем, выçлăха тата ытти йывăрлăхсене те пăхмасăр, хăйсен ирĕкĕпех суббот-никсене тухнă. Ун пек субботниксене В. И. Ленин хăй те хутшăнса ĕçленĕ. Ĕççыннисем пĕтĕм вăя хурса ĕçленипе çеç ун чухнехи çамрăк Совет влаçĕ хăйне йĕри-тавралла сырăнса илнĕ белогвардеецсемпе интервентсен çарĕ-сене çĕнтернĕ.

Большевиксен партийĕ тата унăн аслă çулпуçĕсем Ленинпа Сталин суб-ботниксене яланах пысăк хак парса ырланă.

Хальхи отечественнăй вăрçă вăхă-тĕнчи йывăр вăхăтра та совет халăхĕ, хăйĕн граждăн вăрçи çулĕсенчи тра-дицийĕсене аса илсе, воскресниксене анлăн туса пыма тытăнчĕ. Кашни тÿ-рĕ кăмăллă совет гражданинĕ кан-малли кунра воскресника тухса ĕçлес-сине хăйĕн пархатарлă тивĕçĕ тесе шухăшлать. Çапла ĕçленипе вăл Со-вет Союзĕн оборонине çирĕплетме май парать, Хĕрлĕ Çара тĕрекетме пу-лăшать.

Çак патриотизмлă движение пирĕн совет çамрăкĕсем активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Комсомолăн малта пыракан организацийĕсем пуçарнипе тата ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ ырла-нипе, пирĕн совет çамрăкĕсем оте-чественнăй вăрçă пуçланнăранпа те-миçе воскресник туса ирттерчĕç. Ку воскресниксене вуншар миллион çын хутшăнса ĕçлерĕ. Çамрăксемпе юнашар-рах воскресниксенче ваттисем те—ар-çынĕ, хĕрарăмĕ—пурте пулчĕç. Вос-кресниксенче ĕçленĕшĕн илмелли мил-лионшар тенкĕ укçана пĕтĕмпех çĕр-шыв оборонин фондне пачĕç.

Комсомолецсемпе çамрăксен Пĕтĕм Союзри малтанхи воскресникне Чă-ваш республикинче кăна 126 пин çын хутшăннă, вĕсем пурĕ пĕрле 103.571 ĕçкунĕ туса,—77 пин тенкĕлĕх ĕçленĕ. Çак кунхине нумай комсомолецсем ĕç-ре героизм тĕслĕхĕсене кăтартса панă. Автомобильсем юсакан заводра ĕçле-кен вулканизатор Иванов юлташ воск-ресник кунĕнче хăйĕн ĕç нормине 800 процент тултарнă. Çакăн хыççăн орга-низациленĕ воскресниксем тата вăйлă-рах хавхаланупа иртрĕç. Ленинла—Сталинла комсомол, отечественнăй вăр-çă вăхăтĕнче фронтра та тылра та хăйĕн героизмне кăтартса, граждăн вăрçи вăхăтĕнчи ырă традицисене çĕ-нĕрен чĕртессишĕн кĕрешекен удар-нăй отряд пек малта пырать. Вăл В. И. Ленин субботниксем çинчен вĕ-рентсе хăварнисене пурнăçа кĕртес ĕçе çĕнĕрен пуçарать.

Февралĕн 15-мĕшĕнче Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 24 çул тул-тарнă ятпа организациленĕ тăватта-мĕш воскресник пулчĕ. Ку воскрес-ник: «Кашни комсомолец, кашни çам-рăк рабочипе колхозник—воскресникре пулмалла! Февралĕн 15-мĕшĕнче чи пысăк ĕç тухăçлăхне парар!» текен лозунгсемпе иртрĕ. Воскресникре ра-бочисем, колхозниксем, интеллигенци хастарлăн ĕçлерĕç. Ĕçлесе илнĕ укçа-на пĕтĕмпех танксен колоннине тунă çĕре пачĕç.

Пирĕншĕн, кашни совет граждани-нĕшĕн, хамăрăн ирĕклĕ çĕршыва сых-ласа усрассинчен пархатарлăрах ĕç урăх çук. Акă мĕншĕн ĕнтĕ совет ĕç-çыннийĕсем хăйсен тăван çĕршывне пулăшассишĕн вăхăта та, вăйĕсене те, пурлăхне те хĕрхенмеççĕ. «Этемĕн чи хакли вăл—пурнăç,—тенĕ çамрăксем юрататакан писатель, паллă большевик Николай Островский хăйĕн геройĕн Павел Корчагин чĕлхипе.—Çак пурнă-ça этем пĕр хут анчах пурăнать. Ça-вăнпа та ăна, усăсăр ирттернĕ çул-семшĕн кайран чĕрене ыраттарса ку-лянмалла ан пултăр тесен, мĕнле те пулсан лайăхрах ирттерме тăрăшмал-ла... Çапла вара вилнĕ чухне: эпĕ пĕ-тĕм пурнăçа, пĕтĕм вăйăма тĕнчери чи лайăх ĕçшĕн—этемлĕхе ирĕке кă-ларассишĕн кĕрешес ĕçе патăм, тесе каламалла пултăр».

Кашни совет патриочĕ хăйĕн юратнă çĕршывĕн оборонишĕн ырми-канми ĕç-лемелле, кунран кунах Хĕрлĕ Çара пулăшса тăмалла. Çакăн пек тусан çеç вăл: эпĕ хамăн патриотизмла ти-вĕç хушнисене пурне те турăм, эпĕ халăхпа пĕрле çапăçрăм, тăшмансене хирĕç кĕрешнĕ чух эпĕ хамăн мĕнпур вăйăма, пĕтĕм пултарулăха, пĕтĕм ăс-хакăла йăлтах çав кĕрешĕве патăм, тесе калама пултартăр.

В. ИГНАТЬЕВ.

ВКП(б) Обкомĕн инструкторĕ.

Укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен татаççĕ

ЕЛЧĔК. Германи фашисчĕсене çапса çĕмĕрме тăван çĕршыва укçа-тенкĕ ыт-ларах кирлине пирĕн ĕççыннисем ла-йăх ăнланса илнĕ. Çавăнпа та колхоз-никсем государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене срокченех тÿлесе татма тă-рăшаççĕ. Лаш-Таяпа, Вăрăм Хăва ялсо-вечĕсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă уява самообложени тата культсбор ук-çисене пĕтĕмĕшпех тÿлесе татнипе кĕтсе илчĕç. Патреккел, Кушкă тата ыт-ти ялсовечĕсенче те укçа-тенкĕ пухас ĕç лайăх пулса пырать. Ку ялсовечĕ-сенчи колхозниксем нумайĕшĕсем ук-ça-тенкĕ парăмĕсене пĕтĕмпех тÿлесе татрĕç.

Халĕ финагентсем вăрçă вăхăтĕнчи налог укçине срокчен пухса пĕтерессиш-шĕн кĕрешеççĕ. Патреккел ялсоветĕнчи финагент Петров юлташ колхозниксем хушшинче массăллă агитаци ĕçне ла-йăх йĕркеленĕ. Çапла майпа вăл вăрçă вăхăтĕнчи налог укçине кĕске срокрах 15 пин тенкĕ ытла пухнă. Вăрçă вăхă-тĕнчи налог укçине уйрăм колхозник-сем: Д. Петров, М. Харитонов юлташ-сем—600-шер тенкĕ, М. Дергунов юл-таш—700 тенкĕ, А. Барановпа А. Бори-сов юлташсем—400-шер тенкĕ тÿленĕ.

Кушкă ялсовет çыннисем те Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна укçа-тенкĕ пухмалли 1942 çулти плана 60 процен-та яхăн тултарнипе кĕтсе илчĕç.

А. ЧЕРНОВ.

* * *

КАЛИНИНО. Районри чылай колхоз-сем вăрçă вăхăтĕнчи налога срокченех тÿлеççĕ. Анат-Карачурари «Социализм çулĕпе» колхоз членĕсем çак кунсенче вăрçă вăхăтĕнчи налога çине тăрсах тÿлеме тытăнчĕç. Сăмахран, М. Сен-кер, К. Иванов, П. Степанов юлташсем вăрçă вăхăтĕнчи налога 400-шер тенкĕ тÿлерĕç. Çавăн пекех ытти колхозник-сем те çĕнĕ налога васкасах тÿлеççĕ.

Ямбахтино ялсоветĕнче те ку ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун тĕлне ку ялсоветне кĕрекен колхоз членĕсем вăрçă вăхă-тĕнчи налог укçине 9 пин тенкĕ ытла тÿлерĕç.

Б. ШОРНИКОВ.

Рузвельт радио тăрăх тухса калани

НЬЮ-ИОРК, февралěн 24-мěш. (ТАСС). Ěнер Вашингтон çуралнă куна асăнса Рузвельт радио тăрăх сăмах тухса каларě.

Хальхи вăхăтри аслă кěрешў пире çакна вěрентет,— тенě Рузвельт, — эпěмěр ирěклěхě, харпăрлăхăн хăрушсăрлăхě мěнпур тěнчере пур çěрте те эпěмěр прависемпе ирěклěхне тата тěрěслěхе сыхласа хăварнинчен килет. Хальхи вăхăтра пыракан кěрешў çěнě йышши вăрçă пулса тăрать. Иртнě вăхăтсенчи мěнпур вăрçăсенчен вăл вăрçă меслечěсемпе вăрçăра усă куракан хěçпăшал тěлěшěнчен кăна мар, çавăн пекех тата хăйěн географиллě условийěсемпе те уйăрăлса тăрать. Çак вăрçă вăл кашни континент çинче, кашни утрав çинче, кашни тинěс çинче, авиаци тěнчери кашни линийě çинче пыракан вăрçă пулса тăрать.

Халиччен пирěн çине килсе тапăнасран хўтлěх пулса тăнă тесе калакан аслă океансем текех ěнтě хўтлěх пулма пăрахрěç, вěсем урлă вăрçă çулěсем каççě. Пирěн çав çулсене хўтěлессишěн, хамăрăн союзниксемпе çыхăну тытмалли коммуникаци линийěсене хўтěлессишěн кěрешмелле—пирěн çав çулйěрсене вěсене тытса илсе пўлсе лартма мěнпур вăйне хурса тăрăшакан противникран хўтěлемелле. Гитлеровецсемпе японецсен задачи—Америкăри Пěрлешўллě Штатсене, Англие, Китая тата Российăна пěр-пěринчен уйăрасси, вěсене хупăрласа лартса снабженипе вăй-хăват илсе тăмалли çăлкуçěсенчен уйăрасси пулса тăрать. «Пěр-пěринчен татса уйăр»—çакнашкал ěнтě тěнěл держависен пуринěн те паллă пулса тăракан тахçанхи политики.

Пирěн суднăсем хальхи вăхăтра коммуникацин тăватă тěп линийěсем тăрăх çўреççě, çав линисем Çурçěр Атлантика, Кăнтăр Атлантика, Инди океанě тата Лăпкă океанăн кăнтăр пайě урлă выртаççě. Çав çулсем тăрăх грузсем икě еннелле те кайса тăраççě. Войскăсемпе боеприпассем турттарса каякан суднăсем каялла пирěн нушасене ти вěçтерме кирлě чěртаварсем турттарса таврăнаççě. Пурнăçшăн питех те кирлě çав çулйěрсене сыхласа хăварасси питě йывăр задача пулса тăрать. Çакă вăл пирěнтен çавтери нумай ресурссем тата, чи малтанах, самолетсемпе танксем, орудисемпе суднăсем питě нумай туса кăларма ыйтать. Эпир çав задачăна пурнăçлама пултаратпăр тата пурнăçлатпăр та тесе калатăп пулсассăн, эпě çакна татах Америка халăхěн ячěпе калатăп.

Çав çулйěрсем питě вăрăм пулсассăн та тата вěсене хўтěлесе тăма йывăр пулсассăн та, эпě сире çакна калама пултаратăп: çав пысăк ěçе тума пирěн ěнтě Америка летчикěсем ларса вěçекен бомбардировщиксемпе истребительсем нумай, вěсем хальхи вăхăтра Лăпкă океанăн кăнтăр-хěвеланăç пайěнче противника хирěç куллен кун çапăçаççě, çавăн пекех Америкăн пиншер салтакěсем паянхи кун çав районра сывлăшра кăна мар, типě çěр çинче те пысăк операцисем туса пыраççě. Çапăçусен çав районěнче Японин, чăнах та ěнтě, малтанхи вăхăтри ěçěсем ăнăçлă пулчěç, мěншěн тесен вăл Лăпкă океанри нумай утравсем çинчи, çавăн пекех тата Китай çыранěнчи, Индо-Китайри, Таири тата Малайăри хăйěн нумай тěрлě ансат плацдармěсемпе тата базисемпе усă курса, хăй тапăнма палăртнă пунктсем патне çывăхах нумай самолетсем илсе пыма пултарнă. Японин хăйěн войскисемпе транспорчěсене Японипе Китайран кăнтăралла Китай тинěсě урлă çăмăллăнах куçарма май килнě, çак çул çинче Японин войскисемпе транспорчěсене Япони самолечěсем çул тăршшěпех хўтěлесе тăма пултараççě. Вăрçă пуçламиччен чылай малтанах Филиппин утравěсене японецсем виçě енчен çавăрса илнě те пулнă. Хěвеланăçěнче японецсем Китайпа Индо-Китайăн çыранěсене хăйсен аллинче тытса тăнă, çакна ăна вěсен аллине Францин Виши правительстви панă. Çурçěр енче татах японецсем тытса тăракан утравсем выртаççě, çав утравсен тапăнăвě Çурçěр Лусон патне çитиех сарăлса выртать. Хěвелтухăçěнче Японин мандатěнчи утравěсем выртаççě, вěсене пěтěмěшпех японецсем хăйсем кăна йышăнса илнě тата çав утравсене вěсем, мěнпур обязательствăсене пăссах çирěплетнě. Çав çěршер утравсем карттăсем çинче пěчěк пăнчăсем пек кăна куранаççě, анчах та вěсем стратеги тěлěшпе пысăк районна йышăнса тăраççě. Гуам утравě вěсем хушшинче тăр-пěччен аванпост пек кăна ларать, вăл утрава эпир нихăçан та çирěплетмен.

1921 çулта Вашингтонра тунă договор тăрăх, эпир Филиппин утравěсем çинчи укрепленисене малалла сармалла мар тесе çирěп сăмах панă. Пирěн унта хăрушлăхран хўтěлекен тинěс-çар бази пулман, çавăнпа та ěнтě эпир çав утравсемпе тинěсри вăрçă операцийěсенче усă курма пултарайман. Çак вăрçă пуçлансан çийěнчех Япони войскисем Филиппинсен икě енěпе те кăнтăрти нумай тěрлě пунктсем патне куçма тытăнчěç, çапла вара вěсем Филиппин утравěсене çурçěртен, кăнтăртан, хěвелтухăçěпе хěвеланăçěнчен пěтěмěшпех çавăрса илчěç. Çавăн пек çавăрса илни тата Япони самолечěсем сывлăшра контроль туса тăни ěнтě пире Филиппин утравěсене паттăррăн хўтěлекенсем патне çынсемпе материалсем тěлěшпе пулăшу яма май [illegible]. Пурнăç ыйтнă тăрăх пирěн юлашки 40 çул хушшинчи стратеги çакнашкал пулнă: утравсем çине Япония анлăн пырса тапăнас пулсассăн, пирěн противник малалла куçса пынине вăрахлатассишěн çапăçмалла, ерипен Батаан çурутравě тата Коррегидор çинелле чакса пыма тăрăшмалла.

Эпир çакна пěлсе тăнă: çак вăрçăра аякри утравсем çине мар, тўрех Япони çине хěссе пырса эпир çěнтермелле. Эпир çакна пěлсе тăнă; хамăрăн алăри пуян ресурссемпе усă курса, эпир Японие çěнтерме пултаратпăр, ăна тинěс çинче те, çěр çинче те тата сывлăшра та пусарса лартма пултаратпăр. Юлашки икě уйăх хушшинче мěн пулса иртни пирěн çав тěп стратегие улăштарттармарě. Мěнпур Азин талккишěнчи контроле хăй аллине тытса илме иртěнсе кайса хапсăннăшăн эпир Японие хаклăран та хаклăрах тўлеттеретпěр. Пирл-Харбор çине японецсем пырса тапăнни пирěншěн йывăр пулчě пулин те, японецсем çав тапăнăвăн пěлтерěшне ытлашши ўстерсе ячěç. Малтанласа ăна тěнěл держависен пропагандисчěсем ўстерсе пычěç, анчах, питě шел пулин те, манăн çакна калама тивет: çавăн пек ўстерсе ярас ěçе американецсем хăйсем те хутшăнчěç.

Нумай чухне вăрçă операцийěсем çинчен вăхăт çитмесěр тěплěн пěлтерме юраманнине Америка халăхě ăнланать. Вăхăт çитмесěр çавăн пек пěлтерни тăшман аллине вăрçă ěçěсем çинчен информаци пама, тăшман çавăнпа усă курма пултарать. Çавăн пек пуласран пирěн сыхланмалла.

Суя хыпарсенчен тата фактсем çинчен юри пăсса пěлтернисенчен хăтăлас тесе, çакна пěлтерме тивěçлě: декабрěн 7-мěшěнче Пирл-Харбор çине пырса тапăннă чухне пирěн салтаксемпе офицерсем 2.340 çын вилнě, 946 çын аманнă. Пирл-Харборта тăнă мěнпур çар карапěсенчен — линкорсенчен, йывăр крейсерсенчен, çăмăл крейсерсенчен, авианосецсенчен, эсминецсемпе подводнăй лодкăсенчен, — 3 карап кăна пěтěмпех стройран тухнă. Лăпкă океан флочěн нумай карапěсем Пирл-Харборта пачах та пулман. Пирл-Харборта пулнă карапсенчен чылайăшне тěрěс-тěкěлех хўтěлесе хăварнă, сиенленнисене юсаса строя кěртнě, хăш-пěрисене халě юсаççě. Юсаса пěтерсессěн çав карапсем ěлěкхинчен те вăйлăрах çар карапěсем пулаççě. Пирл-Харборта пирěн 1000 самолет пěтнě тесе пěлтерни, ытти киревсěр хыпарсем пекех, тěрěс мар. Японецсем çав кун пирěннисенчен мěн чухлě самолет пěтернине хăйсем пěлмеççě. Эпě вěсене çакăн çинчен пěлтерме шутламастăп, анчах эпě шантарса çакна калама пултаратăп: паянхи куна çитиччен, японецсем Пирл-Харбор çине пырса тапăннă чухне пирěн самолетсене мěн чухлě пěтернине шута илсессěн те, эпир японецсене вěсем пирěннисене пěтернинчен чылай ытларах самолет пěтернě.

Эпир тата пирěнпе пěрлешнě çěршывсене çапла сăмах паратпăр: Японипе Германин милитаризмне пěтерсе тăкмалла. Эпир хамăрăн вăйсене кунран кун ўстерсе пыратпăр. Часах ака пирěн тăшмансем мар, эпир наступлени тума тытăнатпăр. Юлашки çапăçусенче вěсем мар, эпир çěнтеретпěр; вěсем мар, эпир татăклă мир туса хуратпăр. Европăри чуралăха кěрсе ўкнě çěршывсем фашистсен пусмăрě мěн иккенне пěлеççě. Корейăпа Манчжури халăхěсем хăйсем тўссе иртернě тăрăх Японин тискер деспотизмě мěн иккенне пěлеççě. Азири мěнпур халăхсем лайăх пěлсе тăраççě: вěсемшěн кашнийшěн, çавăн пекех пирěншěн те хисеплě те тивěçлě малашлăх туса хурасси пěрлешнě çěршывсем тěнěл держависен вăйěсене, чуралăх сарма хапсăнакансене, çěнтернинчен килет.

Германипе Италия тата Япония самолетсемпе орудисем, танксемпе суднăсем туса кăларас тěлěшпе хăйсем мěн чухлě вăй пухма пултарнине вěçне çитиех пухса çитерчěç, вěсен пултарулăхě ку тěлěшпе ěнтě вěçне çитрě. Пирěнпе пěрлешнě çěршывсен, уйрăмах Америкăри Пěрлешўллě Штатсен, ку енěпе ěçсем пачах урăхла. Çавăнпа та пирěн задача — хамăрăн производствăна çавтери анлăн сарасси, пирěнпе пěрлешнě çěршывсем хăйсен аллинче тинěссем çинчи контроле тытса тăма пултарччăр тесе тата сывлăшра противниксенчен нумай вăйлăрах пулччăр тесе кирлě таранах вăйлатасси пулса тăрать. Кăçалхи январěн 6-мěшěнче эпě самолетсемпе танксем тата орудисемпе суднăсем туса кăларас ěçре хăшпěр татăклă задачăсем лартрăм. Тěнěл держависен пропагандисчěсем çав цифрăсене фантазиллě цифрăсем терěç. Паян, çав заявление тунăранпа икě уйăха яхăн иртнě хыççăн тата производство ěçěне тěплěн палланă хыççăн, эпě сире çав задачăсем пурнăçа кěреççě тесе çирěплетсе калама пултаратăп.

Çěршывăн пур кěтессисенче те производствăри специалистсем, çавăн пекех тата рядовой арçынсемпе хěрарăмсем предприятисенче юратса, ěçе чěререн парăнса ěçлеççě. Пысăк прибыльсем илессишěн тата пěри тепринчен çўлте тăрассишěн тăрăшма халě вăхăт маррине рабочисем, предпринимательсемпе фермерсем, уйрăм çынсемсěр пуçне, ăнланаççě. Вăрçă нушисем валли çěнě предприятисем тума, кивě предприятисене аслăлатма тата çěнěрен юсаса йěркелеме чěнетпěр эпир. Çав предприятисенче ěçлеме арçынсемпе хěрарăмсене мěнле те пулин ытларах пухма тăрăшатпăр. Эпир нумайшар сехет хушши ěçлетпěр. Кашни çěнěрен туса кăларнă самолет, кашни çěнě танк, кашни çěнě оруди е судно çывăхри çитес уйăхсенчех пěр-пěр инçетри фронтра вăрçă ěçěсене ушăну кўме пултарать; пирěн фронтри салтаксене вилěмрен çăлса хăварса пурнăç пама пултарать. Эпир çак вăрçăра парăнас пулсассăн, пирěн демократи çěнěрен чěрěлсе тăриччен нумай ăрусемпе ěмěрсем иртěç. Эпир хамăр вăйсене чакарсассăн, эпир хамăр хушăмăрти харкашу пирки боеприпассем туса кăларассине чакарсассăн, паллах, эпир çак вăрçăра çěнтерў тума пултарайман пулăттăмăр. Пирěн умра пархатарлă виçě тěллев тăрать: 1) пирěн хамăрăн ěçе пěр кунлăха та чарса тăмалла мар. Ěçре мěнле те пулин конфликт сиксе тухсассăн, çав конфликта арбитраж урлă татса париччен ěç малтанхи пекех пěр тикěс пымалла, çапла çěнтерў тăвиччěнех ěçлемелле. 2) Пěр-пěр уйрăм ушкăна е профессие ыттисенчен маларах кăларса тăратассине е ыттисенчен лайăхрах вырăн парассине ыйтмалла мар пирěн. 3). Хамăрăн çěршыв ыйтать пулсассăн, пирěн пурнăçри чылай ырлăхсем çинчен манмалла, хамăрăн яланхи пурнăçа улăштармалла. Пирěн пěтěмěшлě тăшман пирěн мěнпур суртйěрсене тата пирěн çěршывăн мěнпур пайěсенчи пěтěм ирěклěхсене пěтерсе тăкма хапсăннине асра тытса, çакăнта каланисене пěтěмпех пурнăçа кěртсе пымалла.

Американецсен хальхи ăрăвěн паянхи положение шута илсе çакна лайăх ăнланмалла: пěр-пěр уйрăм çыннăн, пěр-пěр уйрăм ушкăнăн пурнăçěнчен тěнчере татах та пахараххи, хаклăраххи пуррине, çавăншăн кашни çын жертвăсем тума хатěр пулмаллине тата çавăншăн вăл хăйěн ырă пурнăçěпе пурлăхěсене кăна мар, хăйěн пурнăçне те хавасланса пама тивěçлине ăнланса илмелле. Пирěн пуласлăх пысăк хăрушлăх умěнче тăнă вăхăтра хамăрăн тăван çěршыв пире мěн пек хаклине тата эпир хамăрăн тăван çěршывшăн мěн тума тивěçлине пирěн вěçне çитиччěнех тўрě кăмăлпа ăнланса илмелле.

Пирěн çěршывсем пěрлешни, — тенě Рузвельт, — никама пăхăнман халăхсен союзě, хăйсен тивěçлěхěпе те, хăйсен пěлтерěшěпе те пěртанлă халăхсен союзě пулса тăрать. Пěрлешнě çěршывсем пěрлěхлě ěçе парăннă. Вěсем хăйсем çинче вăрçăн хăрушă вăхăтне пěр пек тўссе иртереççě. Пěрлěхлě те пěтěмěшлě ěçре пирěн хамăрăн тўпе пулма тивěçлě, çав тўпене пурнăçа кěртнě çěрте пирěнтен кашни хăйěн тивěçлě вырăнне йышăнса тăмалла. Пирěнтен кашни ытти çынсемшěн пěр пекех кирлě пулса тăрать, çавăн пекех пирěн пурнăç та ыттисенчен килет.

Эпир хамăрăн командование пěрлештертěмěр тата пěр-пěрин хушшинче çирěп союз, юлташла çыхăнусем туса хутăмăр. Эпир, американецсем, пěрлешўллě производствăна пулăшса пырăпăр, хамăрăн пěрлěхлě ěмěтсене пурнăçа кěртнě çěрте йывăрлăхсене пěрле тўссе иртерěпěр. Çакă вăл нацилле пěрлěхе пěлтерет, çав пěрлěх нимěн умěнче те чарăнса тăмасть, расăсем хушшинчи уйрăмлăхсем те, халăхсен хăйне расна ăнлавěсем те, экономиллă уйрăмлăхсем те çав пěрлěхе чăрмав кўме пултараймаççě. Эпир, пěрлешнě çěршывсем, хамăр ěмěтленекен пулас мир никěсленсе тăма тивěçлě хăшпěр принципсем пирки пěр-пěринпе калаçса татăлнă. Атлантика хартийě Атлантика океанě тавралěнчи çěршывсене кăна мар, мěнпур тěнчене пырса тивет: агрессорсене хěçпăшалсăрлантармалла, нацисене халăхсене самоопределени прависем памалла тата тăватă тěрлě ирěклěх туса памалла: сăмах ирěклěхě, совесть ирěклěхě, хěн-хуртан ирěклě пуласси тата хăрушлăхран ирěклě пуласси. Фашистсем пырса тапăнни мěн пек йывăррине Англипе вырăс халăхěсем чылайранпах пěлеççě. Лондонпа Мускав кунçулě пирки хытах иккěленмелле вăхăтсем те пулчěç, анчах англичансемпе вырăссем вăрçа малалла туса пыма хатěр тăрассине пирки пирěн нихăçан та нимěнле иккěленў те пулман. Паян ěнтě мěнпур пěрлешнě çěршывсем вырăссен чаплă çарне вăл 24 çул тултарнă ятпа саламлаççě.

Эпир, американецсем, хальхи вăхăтра пурте питех те пысăк испытанисем умěнче тăратпăр. Пирěн халиччен нихăçан та çакăн пек вăй нумай хурса кěрешме лекмен. Нихăçан та пире вăхăт хальхин пек çителěксěр пулман, çав питех те кěске вăхăтра пирěн питех те нумай ěçсем тумалла. Вашингтон генералăн ывăнса çитнě салтаксенчен тăракан йышлă мар çарě, поражени йывăрлăхне тўссе, Нью-Джерси хирěсем тăрăх каялла чакнă чухне, Том Пейн хăйěн барабанě çине кăвать суттинче çакнашкал сăмахсем çырса хунă, вăл сăмахсене Вашингтон генералăн приказě тăрăх, унăн çарěн мěнпур полкěсенче вуласа панă, çав сăмахсем салтаксен чěрисене паттăрлăх кўнě: «Йывăр кунсем вăхăтěнче тăван çěршывшăн çапăçассинчен пăрăнакан çын вăл салтак та, патриот та мар, анчах кам хамăрăн тăван çěршыва чěререн парăннă, ăна мěнпур халăх юратать, тав тăвать. Тиранне, тамăка çěнтересси пекех, çěнтерме çăмăл мар. Çапах та эпир çакна çирěп ěненсе тăратпăр—жертвăсем мěн чухлě йывăртарах, çěнтерў çавăн чухлě пахарах». Çапла каланă американецсем 1776 çулта. Çапла калаççě американецсем паянхи кун.

Хěрлě Çар 24 çул тултарнă ятпа ютçěршывсенчен килнě саламсем

Чехословаки республикин президенчě Эдуард Бенеш М. И. Калинин патне янă телеграмма

СССР Верховный Совет Президиумěн Председателě М. И. Калинин юлташ Чехословаки республикин президентěнчен г-н Эдуард Бенешран телеграмма илнě.

«Хěрлě Çарăн уяв кунě эпě Сире, Халăх Комиссарěсен Совечěн Председательне Иосиф Сталина тата пěтěм Хěрлě Çара Чехословаки республикин тата мěнпур Чехословаки халăхěн ячěпе, Сирěн салтаксем вăрçăра пысăк ăнăçусем тунă ятпа, чěререн саламлатăп тата ырă сывлăх сунатăп. Çак вăрçăра сирěн салтаксем тунă паттăрла ěçсене Совет Союзěн историне тата Европăри мěнпур халăхсем ирěклěхшěн кěрешнин историне ылттăн саспаллисемпе çырса хурěç. 1935 çулта договор тунă хыççăн пирěн çар Европăри мире тата пěтěм тěнчери мире хўтěлес тěлěшпе Хěрлě Çарпа юнашар тăнăшăн эпě хавасланса мухтанатăп. 1941 çулта Совет Союзěпе çěнě договор туса, Чехословаки аслă çěршывпа тытакан хăйěн союзне çěнетнишěн, пирěн çар чаçěсем халě каллех Совет Союзěн территорийěнче, Хěрлě Çарăн рамкисенче, йěркеленнěшěн эпě телейлě. Эпě Эсир çěнтерессине, çавăнпа пěрлех эпир те çěнтерессине шанса тăратăп. Хěрлě Çара эпě малашнехи пур операцисенче те чаплă ăнăçусем тума ырă сунатăп».

* * *

Хěрлě Çарăн генеральнăй штабěн начальникě, Совет Союзěн маршалě Шапошников юлташ çакăн пек саламсем илнě:

Великобританин имперски генеральнăй штабěн начальникěнчен тата сывлăш-çар флочěн штаб начальникěнчен

«Германи захватчикěсене тăтăшах атакăлакан, хěссе пыракан хамăрăн мухтавлă вырăс юлташсене Хěрлě Çарăн уявě ячěпе Британи çарěпе королевски сывлăш флотěнчен чěререн сывлăх сунса саламлатпăр. Сире, Хěрлě Çарпа Хěрлě Тинěс-Çар Флотне, хăвăрăн тăван çěршывăра ирěке кăларас аслă ěçре чи пысăк çитěнўсем тума ырă сунатпăр. Пирěн пěтěмěшлě тăшмана эпир пěрле аркатса çěнтерěпěр».

Америкăн ССР Союзěнчи снабжени миссийěн начальникěнчен, Америкăри Пěрлешўллě Штатсен çарěн бригаднăй генералěнчен Филипп Эймонвиллран

«Хěрлě Çар 24 çул тултарнă ятпа Сире чěререн сывлăх сунса тав тума ирěк парăр. Кăçалхи çул хăйěн тăван çěршывě çине пырса кěнě тăшмана хирěç Хěрлě Çар мухтавлăн тăнă вăхăтра çак уявăн пěлтерěшě татах та пысăкрах пулса тăрать. Хěрлě Çар тěнчене хавасланмалла тунă çěнтерўсем çара тěплěн хатěрленине, унăн çулпуçěсем ăста ертсе пынине кăтартса параççě тата унăн пулас çěнтерěвěсем те пулса иртнě мухтавлă ěçěсем пекех чаплă пулассине ěнентереççě».

Риомри процесс

ЖЕНЕВА, февралěн 25-мěш. (ТАСС). Франци влаçěсем Риомри суд ларăвě эрнере тăватă хут — ытларикун, юнкун, кěçнерникун тата эрнекун тума йышăнни паллă ěнтě. Иртнě эрнекун судăн черетлě ларăвě февралěн 24-мěшěнче ытларикун пулать, тесе пěлтернěччě. Анчах та ку лару пулман. Судăн тепěр ларăвě февралěн 27-мěшěнче эрнекун тин пулать.

«Риомри спектакльти» перерыва Женевăра çапла ăнлантарса параççě: малтанхи икě ларурах ăна хавхалантаракансен тата организацилекенсен пур шухăшěсене те аркатса тăкнă. Айăпланаканнисемпе вěсен защитникěсем тухса калани, цензура енчен темěнле чăрмавсем пулнă пулин те, Францири тата тěнчери обществăллă шухăшсене паллă пулчě. Çакăнпа пěр вăхăтрах тата çав ларусенчен вăрçа организацилекенсем тата Франци поражени тўснишěн айăплисем хăйсен айăпне урăх çынсем çине тиеме хăтланни лайăх курăнчě. Риомри процеса ертсе пыракан нимěçсен гитлерла дирижерěсемпе вěсен Францири помощникěсем çавтери çухалса кайнă пирки, вěсене процеса малашне мěнле йěркелесе пырасси çинчен план тума эрне кирлě пулнă.

НЬЮ-ИОРК, февралěн 25-мěш. (ТАСС). «Риомри камитěн» шалти механикине кăтартса парас тěлěшпе судăн малтанхи ларăвěсенчен пěринче Блюм защитникě ле Токе уççăн каланă сăмахсем питех те паллă вырăн йышăнса тăраççě.

Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчě пěлтернě тăрăх, ле Токе суд ларăвěнче процесс çинчен хаçатсенче мěнле çырмалли çинчен правительство кăларнă инструкцие вуласа панă. Çав инструкцире çапла каланă: «Салтаксемпе командирсем хальхи вăхăтри вăрçăра питех те кирлě хěçпăшалсăр вăрçма пултаракан çар пулма пултарайманнине кăтартса памалла». Инструкцин пěр параграфěнче çапла каланă: «Риомри процесс пире поражени патне илсе пынă лару-тăрăва çеç пăхса тухнине кашни тěслěхрех кăтартса памалла». «Телеграф агентстви хаçатсене тăратакан сăлтавсемпе опроверженисене кашни кунах хирěçлесе пымалла». Малалли пунктсенче процесс çинчен мěнле пěлтерўсемпе статьясем кěртме юранине кăтартса панă.

Айăпланаканнисен пур защитникěсем те: çак документ суд икě тěрлě позици йышăнса тăнине кăтартса парать, тесе шутлаççě. Айăпланаканнисем Петэн режимě конституцие хирěçле режим пулса тăнине кăтартса панă. Петэн, çěнě конституци тума хатěрленес тесе, влаçа хăй аллине илнě, анчах та ку конституцие халě нацисем çирěплетмен-ха. Республикăллă конституцин министрсене суд тăвасси çинчен калакан статьисем халě хăйсен вăйне çухатман-ха.

Судăн февралěн 20-мěшěнче пулнă ларăвěнче Петэн Блюмран тата ытти айăпланаканнисенчен те вăрттăн документсем туртса илнине кăтартса панă.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчě процесс çинчен панă хăйěн пěлтерěвěнче 1934 çулта оборона министрě Петэн пулнă тесе кăтартнă. Корреспондентăн çав пěлтерěвне цензура пăхса тухмасăр та яма ирěк паман.

Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчě пěлтернě тăрăх, Америкăн тăватă корреспондентěнчен пěрне процеса кěртмен, иккěшне каярахпа çеç процеса кěме ирěк панă. Процесра нимěç корреспонденчěсемпе тěнěл держависен ытти корреспонденчěсем нумай. Америка корреспонденчěсем питě сахал.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĚЛТЕРĚВĚСЕМ

НЬЮ-ИОРК, февралěн 25-мěш. (ТАСС). Америкăри Пěрлешўллě Штатсен çар министерствин коммюникинче çапла кăтартса панă: юлашки 24 сехет хушшинче Филиппин утравěсенчи Батаан çурутравěнче çěр çинчи войскăсем активлăн çапăçман.

Февралěн 23-мěшěнче каçхине Японин подводнăй лодки Калифорни çыранěнчи нефтепромыслан сооруженийěсем çине 25 хут пенě. Пысăк сиенсемех кўмен.

АНГЛИ ПĚЛТЕРĚВĚСЕМ

ЛОНДОН, февралěн 25-мěш. (ТАСС). Англи командованийěн коммюникинче çапла кăтартса панă: Англи войскисем Ситтанг юханшывěн хěвеланăç çыранěнчи позицисене тытса тăраççě. Ситтанг юханшывěн сарлакăшě 400 метра çитет.

Австрали командованийěн коммюникинче кăтартса панă тăрăх, Тимор утравě çине Японин çěнě десанчěсем парашютпа анса юлнă. Утрав çывăхěнче Японин пысăк тинěс вăйěсем пуррине асăрханă.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĚН КОМАНДОВАНИЙĚ ПĚЛТЕРНИСЕМ

БАТАВИЯ, февралěн 25-мěш. (ТАСС). Голланди Индийěн командованийěн коммюникинче çапла кăтартса панă: февралěн 24-мěшěнче союзниксен авиацийě Макассар çывăхěнче (Целебес утравě) Япони суднисене хирěç кěрешнě чухне Японин 2 пысăк транспортне путарнă. Кăшт маларах японецсен тепěр пысăк транспортне путарнă пулнă.

Хула çамрăкěсен пухăвě

ШУПАШКАР. Февралěн 24-мěшěнче хулари çамрăксен пухăвě пулса иртрě. Пуху пěр тулли шухăш-кăмăлпа хисеплě президиума Сталин юлташпа ВКП(б) Центральнăй Комитечěн Политбюро составне суйларě.

Рабочисемпе хресченсен Хěрлě Çарě 24 çул тултарнипе çамрăксен задачисем çинчен хулари çарěç комиссарě Моргунов юлташ доклад туса пачě. Доклад хыççăн çамрăксене Хěрлě Çар пурнăçěпе ěçěсем çинчен, отечественнăй вăрçă фрончěсенчи уйрăм эпизодсем çинчен вăрçă участникěсем каласа пачěç. Юлашкинчен ВЛКСМ Обкомěн секретарě П. Михайлов юлташ сăмах каларě.

Çамрăксен пухăвě çěкленўпе, СССР халăхěсен аслă çулпуçě, генилле полководец Сталин юлташ патне саламлă çыру ячě.

Пуху хыççăн красноармеецсен юрăпа ташă ансамблě концерт пачě тата «Нимěç çарěсене Мускав патěнче çапса аркатни» кинокартина кăтартрěç.

Çар ěçне тăрăшса вěренчěç

Учрежденисенче ěç кунě вěçленнě хыççăнах вěсем вěренў пунктне васканă. 6 сехет çитнě тěле отделенисем, взводсем занятисене иртерме тытăннă. Канмалли кунсенче вара иртен пуçласа тěттěм пуличченех вěреннě. Çапла, çирěп дисциплинăпа йěркелěх тытса пырса, Ишлей райцентрěнчи учрежденисенче ěçлекен служащисем çар ěçне 110 сехетлě программа тăрăх вěренсе тухрěç.

Ишлей райцентрěнчи всевобуч пунктěнче халăха çар ěçне вěрентессине лайăх йěркеленě. Кăна боецсен пěррремěш ушкăнě вěренсе пынинчен те курма пулать. Тăватă уйăх хушшинче пунктра вěренекен боецсем занятисене пěр сиктермесěр çўренě, тăрăшса вěреннě. Акă райсовет исполкомěн çулйěр отделěн заведующийě Ефимов, ответлă, вăхăта нумай ыйтакан ěçре ěçлет пулсан та, вăл занятисене пěрре те сиктермен. Çавăн пекех Костров, Аверкиев тата ответлă ěçсенче ěçлекен ытти хăшпěр юлташсене пěррремěш черетпе вěренме çўрессинчен хăтарнă пулин те, вěсем вěренме çўрерěç, «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вěренсе тухрěç.

Çар ěçне программа тăрăх вěренсе тухнă хыççăн халě вěренў пункчě всевобуч боецěсен ăмăртăвне хатěрленсе тренировкăллă занятисем туса иртерет. Çакăнпа пěрлех вăхăта вăраха ямасăр боецсен пěлў тěрěслевě пулса иртрě. Пěлў тěрěслевне иртерме ятарласа комисси организациленě, çав комисси умěнче боецсен программа тăрăх пур ыйтусем çине те ответлеме тиврě. Анчах пěлмесěр тытăнса тăракансем пулмарěç.

Халě боецсем ăмăртăва хатěрленсе икě кунра пěрре йăлтăрлă походсем туса иртереççě.

С. ГОРЛАНОВ.

Виçě боецăн амăшě

СОВЕТСКОЕ. Юрмикейкино ялěнчи Чапаев ячěпе тăракан колхозра Борисова Анастасия ятлă кинеми пурăнать. Вăл 57 çулта. Унăн виçě ывăлě фронтра кěрешеççě. Тăваттăмěш ывăлě кăçал 10-мěш класран вěренсе тухать. Борисова, ватă пулин те, çамрăксенчен юлмасть, вăл иртнě çулта уй-хир ěçěнче 255 ěçкунě тунă.

— Манăн виçě ывăл хамăрăн тăван çěршывшăн çапăçнăшăн вěçě-хěррисěр савăнатăп,—тет вăл.

И. ИЛЮШИН.

Отлично вěрентěмěр, стахановла ěçлетпěр

8 уйăх каярах эпě Элěк районěнчи урам тăрăх чупкаласа çўрекен ача кăначчě. 1941 çулти июнěн 5-мěшěнче пире ФЗО шкулне мобилизацилерěç. Врачсем мана вěренме кайма юрăхлă тенине илтсен, савăнтăм. Анчах пит инçе илсе каяççě пулě текен шухăш кăшт пăшăрхантарчě, кирек мěнле пулсан та, çамрăк ача вěт-ха.

Июнěн 17-мěшěнче пире юлташсем Çěмěрле станцийěнчен ăсатса ячěç. Поезд хěвелтухăçěнчи Комсомольск хулине илсе çитерчě. Часах хěрў ěç пуçланчě, вěренме тытăнтăмăр. Тěрлě специальноçа вěрентрěç пире. Эпě электросварщика вěрентěм. Паллах, эпě отлично вěренсе пытăм, хамăн пулас специальноçа лайăхрах ăнланса юлма тăрăшрăм. Çапла вара, 6 уйăх вěреннě хыççăн ФЗО шкулне 5-мěш разрядпа вěренсе тухрăм. Халě эпě заводра ěçлетěп. Ěç нормине кашни кунах 300 процентран кая мар тултаратăп. Пурăнма лайăх. Тинех хамăн пурнăç çулне тупрăм. ФЗО шкулне кайса вěреннěшěн вěçě-хěррисěр хěпěртетěп. Чăваш республикинчи çамрăк ачасем, эсир те ФЗО шкулне вěренме кайма тăрăшăр, хăвăра валли пěр-пěр специальность илěр.

Н. СТЕФАНОВ.

Амур çинчи Комсомольск.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧЕБОКСАРСКОМУ ЛИКЕРО-ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ
требуются
на постоянную работу: опытный тракторист, механик по двигателю внутреннего сгорания, бондари, возчики, кочегары, чернорабочие, работницы.
Оплата сдельная.
С предложениями обращаться: Чебоксарский ликеро-водочный завод, ул. Чувашская, № 65, к главному инженеру.
5—4

ТРЕБУЮТСЯ
ДЛЯ РАБОТЫ В ЧЕБОКСАРАХ:
секретарь-машинистка, плотники, столяры, маляры, штукатуры, каменщики, бетонщики, печники, арматурщики, кровельщики, землекопы, кузнецы, шофера, подсобные рабочие, сторожа, курьеры.
Обращаться по адресу: гор. Чебоксары улица К. Маркса, дом № 80, контрольная будка, с 2 час. дня до 7 час вечера.
3—2 Администрация.

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарěн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайěн — 5—31, ялхуçалăх пайěн — 3—99, «Ленин çулěпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайěн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 391 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. [illegible]